24-мĕш сул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮЛЬ 13 ВЫРСАРНИКУН 163 (5878) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пăрлетĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Выльăх апачĕ ҫителĕклĕ хатĕрлер

Республикăри колхозсен улăхĕсемпе ҫаранĕсенче хĕрӳ ĕҫ пырать. Колхозсем пĕрин хыççăн тепри утă ҫулма тухаççĕ. Хальхи вăхăт — выльăх апачĕшĕн кĕрешес ĕҫри чи ответлă тапхăр пулса тăрать. Тăвай районĕнчи колхозсем пурте ҫаран утисене ҫулса пĕтернĕ. Халĕ вĕсем клевер ҫулаççĕ. Етĕрне районĕнчи колхозсем малтанхи июньччĕ 371 гектар утă ҫулнă. Кунта июлĕн 10-мĕш тĕлне 51 колхозран 24 колхоза утă ҫулма тухнă. Стрелецкăри Буденный ячĕпе тăракан колхоз пĕр кун хушшинче 80 гектар утă ҫулса шăрахнă.

Колхозсен ҫаранĕсемпе улăхĕсенче ҫăра та ҫуллĕ утă ситĕннĕ. Колхозниксем утă ҫулма карăн, йышлăн тухаççĕ, вăйлăн ситĕннĕ утăна вĕсем кĕске срокра, вăхăтра, тирпейлĕ пухса кĕме тăрăшаççĕ. Выраншенчен килекен сырусем колхозниксем утă ҫулнă ҫĕрте пысăк хастарлăхпа ĕҫлени ҫинчен пĕлтереççĕ. Тăвай районĕнчи «Свободный труд» колхозра нумай колхозниксем утă ҫулнă ҫĕрте хăйсен нормисене 150—180 процент тăрăх тултарса пыраççĕ.

«12 лет Октября» колхоз (Кувакино р.) членĕсем утă ҫулнă ҫĕрте шурăм-пуҫпе пуҫласа пĕттĕм пуличчен ĕҫлеҫсĕ. Уткин, Тупицын, Баказов колхозниксем, утă ҫулмалла машина ҫинче ĕҫлесе, норма тăрăх 5 гектар ҫулас вырăнне 7,5—8 гектар таран ҫулаççĕ.

Малта пыракан колхозсем утă ҫулса пĕтерсе государствăна утă тăратас обязательствăна та пурнăҫланă. Государствăна утă парса татнă колхозсен ретĕнче — Калинински районĕнчи «Броневик», «Коминтерн», «Трактор» колхозсем т. ыт. та. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз утă тăратмалли обязательствăна июлĕн 10-мĕшĕнче тултарнă. Вĕсем государствăна 1941 ҫулхăн 160 центнер утă панă.

Колхозсем государствăна чи малтан ҫулнă, лайăх пахалăхлă утă параҫҫĕ. Вăрнар районĕнчи «Майăн 1-мĕш» колхоз, утă ҫулса пĕтнĕ хыççăнах, июлĕн 11-мĕшĕнче заготпункта утă пама 16 лавпа тухса кайнă. Колхозсем утă парас плана уборкăна тухиччен тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Калинински районĕнчи колхозсем июлĕн 15-мĕшĕн утă ҫулса тата государствăна парса татаҫăн.

Утă ҫулса хатĕрлес тĕлĕшпе кăҫал пирĕн республикăри колхозсем умĕнче пит те ответлă задача тăрать. СССР Совнаркомĕ кăҫал июньччĕ «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫ валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановлениере Чăваш республикинчи колхозсене шултра апатсем, утă ҫине куҫарса шутласан, выльăхсем валли ҫакăн чухлĕ хатĕрлеме сĕнсе хăварнă: пĕр лаша пуҫне — 34 центнер, майракаллă пĕр шултра выльăх пуҫне — 24 центнер, пĕр ҫурăх пуҫне — 4 центнер хатĕрлесе хумалла. Ҫак цифрăсемшĕн, выльăхсем валли ҫăвăн чухлĕ шултра апатсем хатĕрлесе хăварассишĕн кĕрешес ĕҫĕн ăнăҫлăхне ҫак кунсенче хастарлăн, ҫине тăрса, тирпейлĕн ĕҫлени татса парать. Колхозсен, ҫĕрĕҫ органĕсен, партипе совет организацийĕсен Совет Союзĕн утлă ҫарĕ валли, колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ валли апат-ҫимĕҫ базине ҫирĕплетессишĕн пуҫаруллăн, большевикла хастарлăхпа кĕрешмелле. Ĕҫлеме пуллăшăнсен, ӳсĕмлĕ пулăшăвĕ пирки ҫĕнĕ ҫулхи ĕҫ планĕнче ҫырăнса илнĕ.

Колхоз руководителĕсен задачи ҫакăн пек: утă ҫулма ушкăнпа, карăн тухассине йĕркелемелле. Ĕҫлеме пуллăшăнсен, ӳсĕмлĕ пулăшăвĕ пирки ҫĕнĕ ҫулхи ĕҫ планĕнче ҫырăнса илнĕ.

Колхозсен ҫаранĕсемпе улăхĕсенче ҫăра та ҫуллĕ утă ситĕннĕ. Колхозниксем утă ҫулма карăн, йышлăн тухаççĕ, вăйлăн ситĕннĕ утăна вĕсем кĕске срокра, вăхăтра, тирпейлĕ пухса кĕме тăрăшаççĕ. Выраншенчен килекен сырусем колхозниксем утă ҫулнă ҫĕрте пысăк хастарлăхпа ĕҫлени ҫинчен пĕлтереççĕ. Тăвай районĕнчи «Свободный труд» колхозра нумай колхозниксем утă ҫулнă ҫĕрте хăйсен нормисене 150—180 процент тăрăх тултарса пыраççĕ.

«12 лет Октября» колхоз (Кувакино р.) членĕсем утă ҫулнă ҫĕрте шурăм-пуҫпе пуҫласа пĕттĕм пуличчен ĕҫлеҫсĕ. Уткин, Тупицын, Баказов колхозниксем, утă ҫулмалла машина ҫинче ĕҫлесе, норма тăрăх 5 гектар ҫулас вырăнне 7,5—8 гектар таран ҫулаççĕ.

Малта пыракан колхозсем утă ҫулса пĕтерсе государствăна утă тăратас обязательствăна та пурнăҫланă. Государствăна утă парса татнă колхозсен ретĕнче — Калинински районĕнчи «Броневик», «Коминтерн», «Трактор» колхозсем т. ыт. та. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз утă тăратмалли обязательствăна июлĕн 10-мĕшĕнче тултарнă. Вĕсем государствăна 1941 ҫулхăн 160 центнер утă панă.

Колхозсем государствăна чи малтан ҫулнă, лайăх пахалăхлă утă параҫҫĕ. Вăрнар районĕнчи «Майăн 1-мĕш» колхоз, утă ҫулса пĕтнĕ хыççăнах, июлĕн 11-мĕшĕнче заготпункта утă пама 16 лавпа тухса кайнă. Колхозсем утă парас плана уборкăна тухиччен тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Калинински районĕнчи колхозсем июлĕн 15-мĕшĕн утă ҫулса тата государствăна парса татаҫăн.

Утă ҫулса хатĕрлес тĕлĕшпе кăҫал пирĕн республикăри колхозсем умĕнче пит те ответлă задача тăрать. СССР Совнаркомĕ кăҫал июньччĕ «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫ валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановлениере Чăваш республикинчи колхозсене шултра апатсем, утă ҫине куҫарса шутласан, выльăхсем валли ҫакăн чухлĕ хатĕрлеме сĕнсе хăварнă: пĕр лаша пуҫне — 34 центнер, майракаллă пĕр шултра выльăх пуҫне — 24 центнер, пĕр ҫурăх пуҫне — 4 центнер хатĕрлесе хумалла. Ҫак цифрăсемшĕн, выльăхсем валли ҫăвăн чухлĕ шултра апатсем хатĕрлесе хăварассишĕн кĕрешес ĕҫĕн ăнăҫлăхне ҫак кунсенче хастарлăн, ҫине тăрса, тирпейлĕн ĕҫлени татса парать. Колхозсен, ҫĕрĕҫ органĕсен, партипе совет организацийĕсен Совет Союзĕн утлă ҫарĕ валли, колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ валли апат-ҫимĕҫ базине ҫирĕплетессишĕн пуҫаруллăн, большевикла хастарлăхпа кĕрешмелле.

Колхоз руководителĕсен задачи ҫакăн пек: утă ҫулма ушкăнпа, карăн тухассине йĕркелемелле. Ĕҫлеме пуллăшăнсен, ӳсĕмлĕ пулăшăвĕ пирки ҫĕнĕ ҫулхи ĕҫ планĕнче ҫырăнса илнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух ҫĕрле фронтра ытлашши нимĕнле пысăк ĕҫсемех те пулса иртмен. Пирĕн авиаци противникăн мотомехчаҫĕсене пĕтерес тĕлĕшпе вăрҫă ĕҫĕсем тунă, унăн аэродромĕсем ҫине пыра-пыра тапăннă.

Тĕплĕн шута илнĕ тăрăх, июлĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци сывлăшри ҫапăҫусенче тата аэродромсенче нимĕҫсен 58 самолетне пĕтерсе тăкнă, хамăран 9 самолет пĕтнĕ.

* * *

Советăн 8 бомбардировщикĕ, капитан-орденоносец Котнов командипе, переправăна тата тăшманăн пĕр ҫĕре пухăннă войскисене бомбăсем пăрахса аркатма Н. местечко патне вĕҫсе кайнă. Заданине ăнăҫлăн пурнăҫа кĕртнĕ хыççăн, каялла тавăрăннă чухне бомбардировщиксене тăшманăн 15 истребителĕ тĕл пулнă. Йышлă противника хирĕҫ хăюллăн ҫапăҫма пуҫласа, совет летчикĕсем нимĕҫсен 4 истребительне перҫе антарнă, хамăран самолетсем базăна пурте чиперех тавăрăннă.

* * *

Пулеметчик Гущин хăйĕн станковăй пулеметĕнчен персе нимĕҫсен мотоциклет подразделенине наступлени тума нумай вăхăт хушши чарса тăнă. Кăштах вăхăт иртсен противник Гущин пулеметне сиен тунă. Текех пеме май килмен. Совет пулеметчикĕ вилнĕ пуль тесе, мотоциклистсем атакăна кĕрсе кайнă. Анчах та Гущин юлташ вилнĕ боецăн ручной пулеметне илсе атака тăвакансене ҫĕнĕрен сасартăк пеме пуҫланă. Ҫак ҫапăҫура тăшман мотоциклисчĕсене нумай вĕлерсе тăкнă. Противник атака тăвайман.

* * *

Совет Союзĕн Геройĕ кĕҫĕн лейтенант Васильев ҫурран разведчиксен взводне хăйĕн хыççăн ертсе кайса, белофинсен ушкăнĕ ҫине вирхĕнсе кĕнĕ. Ним тума аптăраса ҫитнĕ тăшман пысăк ҫухатусем тӳснĕ: разведчиксем финсен 70 ытла салаткне вĕлернĕ.

* * *

Кĕҫĕн лейтенант Чаркинăн подразделенийĕнчи 8 красноармеец хăйсен каялла чакакан чаҫне хӳтлесе тăнă. Чаркин юлташ боецсене ăнăҫлăн вырнаҫтарса тăратнă тата курăнмалла мар туса йĕркеленĕ. Нимĕҫсем пытанса ларнă красноармеецсене тупайман, вĕсем ҫине кĕтмен ҫĕртен красноармеецсем пеме пуҫланă. Тăшман арпашăнса кайнипе усă курса, красноармеецсем штыксемпе атака тума пуҫланă. Ҫак ҫапăҫура нимĕҫсен 50 салтака яхăн пĕтнĕ.

* * *

Пулеметчик Заходский хăйĕн пулеметне вăрман хĕрринче вырнаҫтарса лартнă, унăн ҫывăхĕнчи ҫул тăрăх белофинсем наступлени туса пыраҫҫине кĕтнĕ. Тăшмансем пирвайхи подразделенийĕсене Заҳодский юлташ 50—60 метра сывхарса пыма панă та вĕсене пулеметран персе ҫулма пуҫланă. Вăрмanти ҫул тăшман салтакĕсен виллисемпе витĕннĕ. Финсен чаҫĕ каялла тарнă.

* * *

Украинăри граждăнла сывлăш флочĕн пилочĕсем хăйсен службине отлично туса пыраҫҫĕ. Вĕсем фронта вунтăр хут вĕҫе-вĕҫе кайса килеҫҫĕ, аманнисене тата переливани тума кирлĕ юна турттараҫҫĕ. Вĕҫевсем вăхăтĕнче вĕсем ҫине час-часах фашистла самолетсем пырса тапăнаҫҫĕ. Июлĕн 4-мĕшĕнче санитари звенин пилочĕ Кузовлев юлташ, фронта медикаментсем илсе пырса, аманнă икĕ боеца самолет ҫине лартса тухнă. Ҫул ҫинче ун ҫине фашистсен виҫĕ «Мессершмичĕ» тапăннă. Тăшмансем персе янă пулясем кустăрма покрышкине тата фюзеляжа шăтарнă. Самолета сиен пулнă пулсан та, Кузовлев юлташ машинăна пĕр кустăрма ҫине чиперех антарса лартнă. Аманнă ҫынсене турттаракан ҫамрăк пилот Федченко юлташ ҫине нимĕҫсен икĕ истребителĕ тапăннă. Фашистсене самолета сиен кӳме май килнĕ. Федченко юлташ аялалла вĕҫсе аннă, машинăна вăл ҫĕр ҫумĕнчен темиҫе метр ҫӳллĕшĕнче вĕҫтерсе пынă. Аманнă ҫынсене госпитале чиперех илсе ҫитернĕ.

* * *

Н-ски чаҫĕн разведчикĕсем сержант Фролкин тата красноармеецсем Камковпа Брюханов, Финляндипе территорийĕ ҫине пырса кĕрсе, Т. юханшывĕн сывăхĕнче хĕҫпăшалланнă, штатски тум тăхăннă икĕ ҫынна тытса чарнă. Тытса чарнă ҫынсенчен пăшалсене туртса илсе, боецсем вĕсене заставăна илсе пынă. Палламан ҫынсем ҫапла кăтартса панă: вĕсем — Норвегири рабочисем В. Бернер тата Х. Ларсен, Норвегипе Германи оккупацинленĕренпе пуҫласа вĕсем партизансен отрядне тухса кайнă. Гитлер Совет Союзĕ ҫине тапăнни ҫинчен партизансем ҫак кунсенче кăна пĕлнĕ-ха. Партизансем пурте пĕр шухăшлă пулса Норвегипе Финляндин ҫурҫĕр пайĕнче нимĕҫпе финн войскисен тылĕнче малалла кĕрешме йышăннă. Отряд икĕ кĕпере ҫĕмĕрсе тăкнă тата нимĕҫсен охранине пĕтерсе тăкнă та ӗнтĕ. «Вырăссем Гитлера хирĕҫ кĕрешни, — тет Х. Ларсен, — пирĕн тăван ҫĕршывăн та кĕрешни пулса тăрать. Норвегири рабочисем фашистла режимăн мĕнпур тискерлĕхĕпе тӳссе курнă ӗнтĕ, вĕсем пĕр кăмăлпа хăйсен халăхне пусмăрласа мăшкăлланăшăн Гитлера тавăрас кăмăлпа ҫунаҫҫĕ. Гитлеризма ҫĕр ничĕ ҫинчен шăлса ывăтас пулать».

* *

Фабрикăсемпе заводсенче тата колхозсенче ҫине тăрса тăвакан ĕҫре совет патриочĕсем ултавлă тăшмана ҫапса аркатмалли ҫĕнтерĕве хатĕрлеҫҫĕ. Воронежри паровозсем юсакан заводри буксовăй бригада машни кунах нормăна 350—400 процент тултарса ĕҫлет. Кривой Рогри Киров ячĕпе тăракан шахтăри Ткачок юлташăн бригади 10 норма тултарнă, бассейнра ĕҫ тухăҫлăхĕн чи пысăк образецне кăтартнă. Петропавловск станцинчи депора механически цехра ĕҫлекен токарь Федоров юлташ нормăна 500—600 процент иртерсе тултарать.

Кабардино-Балкар автономлă республикинче пысăк тухăҫлă тырпула пухса кĕртес ĕҫ ăнăҫлăн пырать. Республикăри чаплă комбайнер Кужхабиев юлташ тырпул пухса кĕртес ĕҫре пĕр кун нормине 200 процент тултарать. Крым АСС Республикинче кăҫалхи ҫул тырпула вырса пухас ĕҫĕн хăвăртлăхĕсем иртнĕ ҫулсенчи хăвăртлăхсенчен 4 хута яхăн пысăкрах.

* * *

Фронт патĕнчи М. хули ҫине фашистла самолетсем пырса тапăннă вăхăтра пĕр бомба боеприпассем тиенĕ поезд патне ӳкнĕ. Станци начальникĕ Мазолевский юлташ, машинист Букашело юлташ, стрелочниксем Чепурнечный тата Труд юлташсем, хăрушлăха пăхмасăрах, состава хăвăрт уйăрса илнĕ, ҫунма пуҫланă вагонсене урăх ҫĕрелле илсе кайнă. Состава пĕтĕмпе пекех ҫăлса хăварнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 11-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 11-мĕшĕнче фронтра пысăк улшăнусемех пулса иртмен. Пирĕн авиаци кунĕпех противникăн мотомеханизированнăй чаҫĕсене пыра-пыра ҫапса, вĕсене пĕтерсе пынă, противникăн аэродромсенчи авиаци ҫине атакăланă тата Плоешти ҫине бомбăсем пăрахнă.

Тĕрĕсрех палăртнă даннăйсем тăрăх, пирĕн авиаци июлĕн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче противникăн 179 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕҫсемпе румынсен пехотăпа кавалери чаҫĕсем Б. ятлă яла йышăннă. Противника ҫав пунктран хĕссе кăларма Н-ски соединенине хушнă. Артиллерирен вăйлăн персе хатĕрленнĕ хыççăн, совет танкĕсемпе бронеавтомашинисем тăшман ҫине йыткăннă. Яла пырса кĕрсе, танксемпе бронемашинăсем противникăн орудийĕсемпе пулеметчĕсене ҫĕмĕрме тытăннă. Тăшман пехотинецĕсемпе кавалеристчĕсем нимĕн йĕркесĕр тарма пуҫланă. Анчах та яла пирĕн кавалери йĕри-тавра хупăрласа илнĕ пулнă. Фашистсен салтакĕсем ҫине кавалеристсем ҫав тери вăйлăн ыткăннă. Ҫапăҫу пулнă вырăнта салтаксемпе офицерсем 700 ҫын вилнĕ тата аманнă. Тытăкана 247 салтак тата 14 офицер лекнĕ. Вĕсенне 12 оруди, 28 пулемет тата 20 миномет туртса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăҫ Белорусси территорийĕнчи ҫапăҫусенче кĕҫĕн лейтенант Прашин ертсе пыракан танк экипажĕ паттăрăн ҫапăҫнă. Нимĕҫ танкĕсемпе пĕремĕш хут ҫапăҫăва кĕрсенех фашистсен виҫĕ машинине стройран кăларнă. Тепĕр кунне хăюллă танкистсем тăшманăнне 9 машина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противник Н. участокĕнче наступлени тума хăтланнă. Пирĕн чаҫсем артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуҫланă. Тĕл пенипе тăшманăн вăйĕ чакнă, ăна хирĕҫ контратака тунă. Ҫапăҫу хыççăн Н-ски участокри оборонăн малти енче нимĕҫсен икĕ горностелковăй дивизийĕсенчи салтаксемпе офицерсен 1.215 виллине тупнă.

* * *

Боец-связистсен группи, красноармеец Карякин ертсе пынипе, командний пункт патне телефон линийĕ карнă. Ҫав вăхăтра тăшманăн виҫĕ бомбардировщикĕ вĕсенчен инҫех мар ҫĕрте парашютистсем антарнă. Связистсем ҫĕр ҫине анакан диверсантсем ҫине вăйлăн пеме пуҫланă. Диверсантсен бандине йăлтах пĕтерсе тăкнă. Автоматлă хĕҫпăшалсемсĕр пуҫне, диверсантсенчен темиҫе походнăй радиостанци туртса илнĕ.

* * *

Румыни халăхĕ Совет Союзне хирĕҫ вăрҫăшăн мар. Германи фашизмне хирĕҫ протестлесе, румын салтакĕсем ҫартан тухса тараҫҫĕ тата хĕҫпăшалĕсене ватса тăкаҫҫĕ. Румынипе Германи ҫарĕсен тылĕнче партизансем ишĕлтерӳллĕ пысăк ĕҫсем тăваҫҫĕ. Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 9-мĕшĕнче Бухарестпа Яссы хушшинче рельсăран тухса кайса икĕ ҫар эшелонĕ ҫĕмĕрĕлнĕ. Ҫак катастрофăна пула нимĕҫсен 200 салтака яхăн вилнĕ тата платформăсене пулнă 12 самолет пĕтнĕ.

ЧĂВАШ АССР ҪĔРĔҪ ХАЛĂХ КОМИССАРИАТĔНЧЕ

Иртнĕ ҫулсенче, вăрлăхлăх курăк акнă вырăнсенче ҫумкурăксемпе кирлĕ пек кĕрешменнине пула, чылай колхозсенче курăк вăрлăхĕсем (уйрăмăнах клевер вăрлăхĕсем) уйăрса илмĕ йывăр ҫумкурăк вăррисемпе хутăш пулнă.

Ҫавăнпа та вара чылай чухне вăл вăрлăхсене темиҫе хут тасатсан та, ҫав ĕҫе тума чылай вăй тата средствăсем хывсан та, пĕтĕмпех тасатса ҫитерме хĕн пулнă. Ҫавна пула уйрăм колхозсем курăк вăрлăхне государствăна вăхăтра параймасăр тăнă, кондицине ларайман вăрлăх акмалла пулнă.

Ҫаксене шута илсе, Чăваш АССР Çĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕ машинно-тракторнăй станцисен директорĕсене, мĕнпур агрономсене тата колхоз председателĕсене нумай ҫулсем хушши ӳссекен вăрлăхлăх акнă курăксене ҫумкурăксенчен тасатас ĕҫе тĕплĕн организацилеме хушнă. Акнă курăк сайра шăтнă вырăнсенче тата ӳксе ҫаралса юлнă вырăнсенче ҫумкурăксене утăлăх тата силос тума ҫулса илмелле. Вăрлăхлăх акнă курăксене ҫулса пухса кĕнĕ чухне вĕсене ҫумкурăксемпе хутшăнтарассинчен хытă асăрхамалла.

Утă ҫулаççĕ тата ҫулҫăллă апат хатĕрлеҫҫĕ

СЕНТЕР. «Çĕнĕ Юнга», «Большевик», «Малалла», «Красное Сормово», Войков, Фрунзе, Чкалов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те утă ҫуласси сарăлса пырать. Пушкăрт ялсоветĕнчи «Новый путь» колхоз 72 гектар ҫинчен утă пухса кĕнĕ. Тăвата косилка татти-сыпписĕр ĕҫлеҫсĕ. Утă ҫулнă ҫĕре 117 ҫын хутшăннă. Вĕсенчен 25 ҫын пĕр кунхи нормăна иртерсе тултараҫҫĕ. София Мизуркинăпа Христина Гаврилова 0,35 гектар вырăнне кашни кун 0,40—0,45 гектар ҫулаççĕ.

Утă ҫулнă ҫĕрте агитаторсем лайăх ĕҫлеҫҫĕ. Çак кунсенче пĕр номер стена хаҫачĕ кăларнă. Колхоз выльăх апатне пур енĕпе те ҫителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшать. 50 лав ҫулҫăллă апат пухса хатĕрленĕ.

«Çĕнĕ Юнга» колхозра утă ҫулса пухса кĕме 7 авено организацленĕ. Звеносенчи колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕҫлеҫҫĕ. Çак вăхăта ситсе 40 гектар ҫинче утă ҫулнă. Государствăна 71 центнер утă леҫсе панă. Колхозра хальхи вăхăтра столовăй тата ача ясли ĕҫлет.

И. КУЖАКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Ыран июлĕн 12-мĕш тенĕ чух ҫĕрле фронтсенче войскăсен положенийĕнче пысăк улшăнусемех пулман.

Ыран июлĕн 12-мĕш тенĕ чух ҫĕрле пирĕн авиаци противникăн танковăй тата моторизованнăй чаҫĕсене ҫине аркатса тăкмаллах вăйлăн пыра-пыра ҫапнă, унăн аэродромĕсем ҫине каякая тапăннă тата Плоештири нефть базисем ҫине бомбăсем пăрахнă.

Июлĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕҫсен 65 самолетне персе антарнă, хамăран 19 самолет пĕтнĕ.

* * *

Полковник Галуновăн чаҫĕнчи летчиксем, штурмансем тата стрелок-радистсем калама ҫук пысăк хăюллăх тата вĕҫевре чаплă мастерлăх кăтартаҫҫĕ. Июлĕн 10-мĕш тĕлне чаҫăн боевой ĕҫсен журналĕнче противникăнне 103 самолет пĕтерсе тăкнине кăтартса панă, вĕсенчен 89 самолетне сывлăшри ҫапăҫусенче персе антарнă, 14 самолетне тăшманăн аэродромĕсем ҫинче пĕтерсе тăкнă. Галунов чаҫĕнчи летчиксем фашистсен 225 пилотне персе антарнă, вăл шутран 11 пилотне тытăкана илнĕ.

* * *

Артиллерирен нумай вăхăт хушши персе тăнă хыççăн противник тул сутăлса килнĕ вăхăтра Н. юханшывĕ урлă каҫма пуҫланă. Нимĕҫсем шыв урлă каҫма хатĕрленĕ 9 переправăран виҫĕ переправине пирĕн авиаци часах пĕтерсе тăкнă. Вуннăна ҫити пысăк танк, темиҫе бронемашина тата противотанковăй орудисем шыв тĕпне пулнă. Ытти переправăсем тăрăх танковăй батальон, икĕ батальона ҫити пехота тата 22 противотанковăй орудилĕ артиллери подразделенийĕ пирĕн енне каҫса кĕнĕ. Фашистсен ҫак группи каҫса кĕнĕ хыççăн пирĕн артиллерипе авиаци переправăсене пурне те ҫĕмĕрсе тăкнă. Понтонлă кĕперсем ҫинче танксене, артиллерине тата чылаях пысăк йышлă пехотăна пĕтерсе тăкнă. Ҫыранран уйăрса илнĕ нимĕҫ чаҫĕсене совет войскисем флангсенчен хĕссе илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Танксен пăтăра ҫити экипажĕ тытăкана парăннă. Пĕтĕмпе Германи салтакĕсемпе офицерĕсене 429 ҫынна тытăкана илнĕ.

* * *

Н-ски полкăн разведчикĕсем, противникăн тылне пырса кĕрсе, Германин пĕр полкĕн штабĕ ҫине пырса тапăннă, хаклă документсем чылай тупса илнĕ. Каялла килнĕ чух разведчиксем нимĕҫсем снарядсем турттарса тăракан ҫулăн чылай участокĕсене минăсем хурса хăварнă. Тепĕр кунне пирĕн летчиксем минăсем ҫурăлнипе Германин 11 автомашини сирпĕнсе арканса кайнине палăртнă.

* * *

Ҫурҫĕр флочĕн ҫыранри Н-ски батарейи Германипе Финляндипе транспортчĕсене тĕл персе лектерсе пĕтере-пĕтере тăкать. Çак кунсенче батарея командирĕ Космачев юлташ виҫĕ хут персе фашистсен транспортне путарнă.

* * *

Н. участокĕнче нимĕҫсем атака пуҫлама хатĕрленнĕ. Бронемашинăсен ротин командирне, старший лейтенант Шилина малалла тухма тата тăшмана вăхăт ҫитичченех ҫапăҫу валли хатĕрлентермелле тума приказ панă. Çĕрле Шилинăн машинисем вăрман хĕрринчи уҫă вырăнта лайăх позици йышăнса тăнă. Тул ҫутăлса килнĕ вăхăтра нимĕҫсем артиллерирен пеме пуҫланă. Çакăн хыççăн тăшман танкĕсем курăнса кайнă. Пирвайхи хут персех лейтенант Левинский нимĕҫсен командирĕн машини ҫинчи башняна ҫĕмĕрсе пăрахнă. Командирĕ пĕтнĕ хыççăн нимĕҫсем ҫухалса кайнă. Шилин юлташăн ротинчи мĕнпур машинăсем ҫапăҫăва кĕнĕ. Ҫапăҫура тăшманăн 11 танкне пĕтерсе тăкнă, Шилин юлташăн ротинче пĕр бронемашинăна сисĕ кӳнĕ.

* * *

Б. юханшывĕ урлă каҫмалли переправăшăн икĕ кун хушши кĕрешӳ пынă. Çĕрлехи вăхăтсенче нимĕҫсем шыв урлă понтонсем хума хăтланнă, анчах вĕсен ĕҫĕсем ăнăҫлăр пулнă. Пирĕн тупăсемпе пулеметсем вĕсем ҫине хăватлăн персе тăнă. Анчах ҫапах та Германи мотопехотин баҫальонне сулахай ҫыранĕ ҫине каҫса кĕме май килнĕ. Хăюллă командир Поветкин тăшмана хирĕҫ атака пуҫланă, ун хыççăн боецсем ҫĕмĕрсе кĕнĕ. Çак вăхăтра совет бомбардировщикĕ тĕл персе лектерсе понтонлă кĕпере ҫĕмĕрсе тăкнă. Тăшман батальонне пĕтерсе тăкнă.

Малалли 4-мĕш страницăра

Тăшмана çĕмĕрсе тăкма халăхăн мĕнпур вăйĕсене хурар!

ÜКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: СССР Оборона Халăх Комиссарĕн, Совет Союз Геройĕн тата Маршалĕн, Хĕвеланăç енчи войскăсен Главнокомандующийĕн С. К. Тимошенко юлташăн портречĕ.
(С. М. Луцпов художник картининчен тунă репродукци).
Г. Широков фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Водопьянов ячĕпе тăракан комбинатри рабочисем халăх ополченийĕ тăваççĕ

Кăнтăрлахи смена ĕç пĕтернĕ хыççăн рабочисем пурте комбинат килкартишне пухăнчĕç.

Парторганизаци секретарĕ, рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен митингне уçса, çапла калать:

— Мускаври, Ленинградри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пулăшма халăхăн нумай пинлĕ ополченине тунине саламлатпăр тата хамăр та халăх ополченин ретне тăрса тăван çĕршывăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме пулатпăр.

— Совет халăхĕ—ваттисем те, çамрăкисем те Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тăрса, этемлĕхĕн тискер тăшманне — фашизма ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хурĕ, çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Сывă пултăр пирĕн юратнă тăван çĕршыв тата аслă Сталин!—тесе вĕçлет Бызов юлташ хăйĕн сăмахне. Митинга пухăннисем тăван çĕршыва чысласа, Аслă Сталина чысласа нумайччен алă çупса саламласçĕ.

Унтан Бызов юлташ хăйне халăх ополченийĕ ретне илме ыйтса çырнă заявление вуласа парать.

«Манăн кĕçĕн шăллăм Хĕрлĕ Çарта фашизма хирĕç паттăрăн çапăçать. Эпĕ 1902 çулта çуралнă, мобилизаци йĕркипе каяймарăм, Сталин юлташ халăх ополченине тума чĕннине ответлесе, хама халăх ополчени ретне илме ыйтатăп», тесе çырать вăл хăйĕн заявленийĕнче.

Комбинатри рабочи Александр Васильевич Астафьев патриотла хĕрӳллĕ сăмах каларĕ:

— Манăн икĕ ывăл Хĕрлĕ Çарта. Производствăра вунă çул ĕçлетĕп. Хамăрăн тăван çĕршыва, ирĕклĕхе, телейлĕхе пиртен тăшман тытса илеспĕн. Çук, ăна памастпăр! Халăх хăйĕн Октябрьти çĕнтерĕвĕсене никама та памĕ. Мана та халăх ополчени ретне илме ыйтатăп. Эпĕ ватă мар-ха, алла пăшал тытса тăшмана çĕмĕрсе тăкмалăх вăй пур, — тет Александр Васильевич.

Ун хыççăн Стеклов юлташ сăмах илет. Вăл та хăйне ополченине илме ыйтса çырнă заявление вуласа парать.

«Тăван çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă самантра,—тесе çырать вăл,—эпир лăпланса ларма пултараймастпăр. Тăшмана çĕмĕрсе тăкмалла, пирĕн тăван çĕршыва варалама ăна ирĕк памалла мар. Эпĕ те халăх ополчени ретне тăратăп».

Рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем пĕрин хыççăн тепри патриотла сăмахсем каласçĕ, хăйсен заявленийĕсене вуласа парасçĕ. Вĕсен кашни сăмахĕ хĕрӳллĕ, чĕрене пырса тивет, тăшманăн хăрушлăх янăрать.

Халăх ополченийĕн ретне илме ыйтса заявлением панисен йышĕнче граждан вăрçин участникĕсем: Иван Николаевич Жулин, Владимир Константинович Рыбин т. ыт. юлташсем те пур.

Рыбин юлташ белополяксене хирĕç, белофинсен 1921—1922 çулсенчи авантюрине çĕмĕрсе тăкнă çĕрте çапăçнă.

— Халĕ те тăшмана çĕмĕрсе тăкнă çĕрте пулас тетĕп, хамăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме сăмах паратăп,—тет вăл.

Кашнин чĕринче пĕр туйăм — тăван çĕршыва чĕререн юратни, кашнин пĕр ĕмĕт—тăшмана пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкасси. Кашниех алла пăшал тытса тăван çĕршывăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр.

Механик, монтер, счетовод, бухгалтер, рядовой рабочи, коммунист, беспартийнăй, ватти те, çамрăкки те — пурте хăйсене халăх ополченийĕн ретне илме ыйтаççĕ.

Митингра ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Федоров юлташ сăмах каларĕ. Вăл Водопьянов ячĕпе тăракан комбинатри рабочисен чĕнĕвне хулари ĕççыннисем пĕр çын пек пулса хапăл туса йышăнăç, тесе шантарчĕ, производствăра вăй-хала шеллемесĕр ĕçлеме чĕнчĕ.

Комбинатри рабочисемпе инженерно-технически работниксен тата служащисен митингĕ пурте пĕр çын пек пулса йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Мускаври, Ленинградри ĕççыннисен мухтавлă примерĕ тăрăх тата Сталин юлташ чĕннипе эпир Хĕрлĕ Çара пулăшма халăх ополчени ретне тăратпăр, Шупашкар хулинчи ĕççыннисене пурне те халех ополчени ретне тăма чĕнетпĕр.

Тăшмана пĕтĕмпе çĕмĕрсе тăкичченех çапăçар. Тăван çĕршыва ирсĕр фашистсене вараламалла парар мар. Ленин—Сталин партийĕ таврa татах та таччăнрах пĕтĕçер. Пĕтĕм вăя—фашизма çĕмĕрсе тăкма!

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр фашизма хирĕç паттăрăн çапăçакан мухтавлă Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Авиаци!

Сывă пултăр Аслă Сталин!

Шупашкар хули.

Пособисем памалла тунă

ÇĔРПУ. («Чăваш Коммуни» корр.). СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ вăрçă вăхăтĕнче рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи военнослужащисен çемьисене пособисем памалли йĕркене çинчен каларнă Указ тăрăх, райсовет исполкомĕ çумĕнчи комисси чылай çемьене пособисем памалла турĕ.

Тинговатовăри колхозницăн Анисия Захаровăн 5 ача, Çырма пуçĕнчи Фекла Максимова колхозницăн 4 ача. Комисси вĕсене кашнине уйăхра 75-шер тенкĕ пособи памалла тунă.

Туçи ялĕнчи Трофим Ивановăн пĕр ывăлĕ Хĕрлĕ Çара кайнă. Вĕсем арăмĕпе яккĕшĕ те ĕçлеме пултараймасçĕ. Комисси вĕсене 75 тенкĕ пособи памалла тунă. Александр Савельевăн (Туçи ялĕ) 2 ывăлĕ те Хĕрлĕ Çарта. Килте виççĕн пурăнаççĕ. Çемьере ĕçлеме пултаракансем çук. Савельев юлташăн çемьи малашне 100 тенкĕ пособи илсе тăма пуçлать.

Районри комиссине хулара пурăнакан инвалид Перасковья Храброва юлташ пырса кĕчĕ.

Манăн 2 ывăл, — тесе çырать заявлениче вăл,—Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхласçĕ. Килте пĕчченех пурăнатăп. Ĕçлеме пултараймастăп. Комисси пособи парса пулăшасса шанатăп.

Храброва юлташ малалла кашни уйăхрах 100 тенкĕ пособи илсе тăрать.

Г. ПЕТРОВ.

Хĕрарăмсем хăйсене фронта яма ыйтаççĕ

— Ирсĕр фашистсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнни пире чунтан тарăхтарать. Фашистсем пирĕн телейпе ирĕклĕхе тытса илеспĕн. Анчах вăл пулас çук. Тăшмана çĕмĕрме Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине йăлтах туса паратпăр,—тесе çыраççĕ Çĕмĕрле районĕнчи хĕрарăмсем.

Медсестра А. Трусова юлташ хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Манăн упăшка халь фронтра фашистсене хирĕç çапăçать, эпĕ те унпа пĕрлех Хĕрлĕ Çар ретне тăрса тăван çĕршыва сыхласшăн». Трусова хăйне фронта яма ыйтать.

Санитарка Корнаушенкова: «Манăн пичче действующи арминче, мана та çавăнта яма чунтан ыйтатăп», тет.

Çавăн пекех, Кумашка разъездĕнче ĕçлекен стрелочница А. Кротова, трактористка-комсомолка М. Мулакова юлташсем те хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтаççĕ.

КАРТАШОВА.

Чугунçул çинчи работниксен сăмахĕ

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă май, чугунçул çинчи ремонтнăй рабочисемпе путевой обходчиксен тата командирсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра çулйĕр мастерĕ—пуçламăш парторганизаци секретарĕ Колдяев юлташ сăмах каларĕ.

—Германи фашизмĕ,—тет Колдяев юлташ,— чечекленсе пыракан Совет Союзĕнчи халăхсене хăйĕн чури туса хурасшăн. Вăл пирĕн пуянлăхсемпе усă курма ĕмĕтленет. Пулас çук вăл! Пирĕн халăх—богатырла вăйлă халăх. Икçĕр миллионлă Совет халăхĕ пĕр çын пек пулса Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне, Хĕрлĕ Авиацине пулăшма ура çине тăчĕ. Вăрă-хурахсене çĕр пичĕ çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех шăлса ывăтаттăр.

Унтан ремонтнăй рабочи К. Муравьев юлташ çапла каларĕ:

— Чугунçул вăл — Хĕрлĕ Çарăн тăван шăлнĕ пулса тăрать. Çавăнпа та пирĕн, чугунçул çинчи работниксен, хальхи вăхăтра нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлемелле. Чугунçул транспортне яланах кăтартуллă тытса тăмалла, кăтартуллă ĕçлеттермелле. Эпир пулăшса пынипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар çĕршывăн ирсĕр тăшманне—Германи фашизмне хăвăртрах пĕтерсе тăктăр.

Чугунçул çинчи работниксем пĕр шухăшлă пулса резолюци йышăнчĕç. Чугунçулне çирĕп йĕркере тытса усрама, кăтартуллă ĕçлеттерме тата кăçалхи капитальнăй ремонтсен планне августăн 1-мĕшне тултарма обязательство илчĕç.

Вăрнар. Н. АНИСИМОВ.

Планран ирттерсе 395 пин тенкĕлĕх продукци

Чăвашкоопинсоюз системине кĕрекен артельсем ăмăртăва тухса, çурçул планне ирттерсе тултарма обязательство илнĕччĕ. Çакна ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Çурçул планне 114 процент тултарса, çĕршыва планран ирттерсе 395 пин тенкĕлĕх продукци панă.

Малтанхи çурçул хушшинче Канашри, Улатăрти, Первомайскри, Шĕнерти, Вăрнарти артельсем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç.

М. М.

Трактористкăсен курсĕ

ЕТĔРНЕ. Машинно-тракторнăй станци трактористкăсен курсне организацилерĕ. Унта районри колхозсенчен пухăннă 30 хĕрача вĕренет. Вĕсен тракторпа ĕçлеме вĕренес хăстарлăхĕ пысăк.

Н. ЦВЕТКОВ.

Сталин юлташ чĕннине ĕçпе ответлеççĕ

ИЕПРЕÇ. «Кооплеспром» алăсталăх артелĕ чылайранпа ĕнтĕ Канаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата Первомайски районри Ленин ячĕпе тăракан артельсемпе ăмăртса ĕçлет. Социализмлă ăмăрту артельсене çитĕнӳ тума нумай пулăшрĕ. Нихăшĕ те пĕрпĕринчен юласшăн мар. Договор тăрăх илнĕ обязательствăсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслесе тухни «Кооплеспром» артель пуринчен те малта пынине кăтартса пачĕ. Иккĕмĕш квартал планне 141 процент тултарнă. Юлашки вăхăтра кунта ĕç тухăçлăхĕ татах та ытларах ӳссе пыма тытăнчĕ. Хăма çуракан тата катка-пичке тăвакан цехсенчи нумай рабочисем нормăна икшер хут ирттерсе тултараççĕ.

Туса кăларакан продукци пахалăхĕ те ӳссех пырать. Çак çула кĕнĕренпе брак пĕрре те пулман. Пĕтĕмĕшпе илсен, продукцине пĕрремĕш сортпа кăларнă. Продукцин хăйне ларакан хакне 4 процент йӳнетесе вырăнне 11,6 процент йӳнетнĕ. Артельте пĕтĕм ĕç график тăрăх пулса пырать.

Стахановецсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсен йышĕ 1941 çула кĕнĕренпе виçĕ хута яхăн ӳсрĕ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх чĕнсе каланă сăмах рабочисен производствăллă активлăхне халиччен пулманла çĕклерĕ. Стахановец столяр Ф. Синяков юлташ икшер норма тултарма пулса столяр Царегородцев юлташпа ăмăртăва тухнăччĕ. Илнĕ обязательствăна иккĕшĕ те ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Вĕсен пĕтĕм шухăш-кăмăлĕ — тăван çĕршыв интересĕсемшĕн ĕçлесси. Синяков юлташ иртнĕ кварталта та хăйне панă задание 200 процент ытла тултарнă. Кашни уйăхрах 700—800 тенкĕ ĕçлесе илет. Паха тĕслĕх кăтартса ĕçленĕшĕн ăна «Отличник промкооперации» значок парса наградăланă. Кунсăр пуçне артель правленийĕ 500 тенкĕ преми панă.

Катка-пичке цехĕнче Ф. Бокановпа М. Рудин юлташсем малта пыраççĕ. Вĕсем 5-шер пичке тăвас вырăнне 10-шар пичке ытла тăваççĕ.

Кунта арçынсем кăна мар, хĕрарăмсем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Станочницăсенчен Мария Токаревăпа Анна Николаева юлташсем плана 140 процент тултараççĕ. Пысăк пултарулăхпа ĕçленĕшĕн Токарева юлташа 400 тенкĕ преми панă.

«Кооплеспром» артель кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе паха пример кăтартать. Çак кунсенче техникăна вĕренмелли кружокран 8 çын вĕрентсе кăларнă. Халĕ татах 31 çын вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне çамрăк работниксене уйрăм специалистсем çумне çирĕплетсе вĕрентме тытăннă. Çак енĕпе катка-пичке тăвакансем 12 çын, 3 столяр, 2 машинист, 2 кочегар вĕренеççĕ. Вĕренексенсем хушшинче хĕрачасем ытларах.

Техминимум урлă вĕренсе тухнă хĕрачасем фронта тухса кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăраççĕ. Çапла, юлашки кунсенче Андриянова, Асанова, Кузнецова, Петрова юлташсем фронта кайнă машинистсемпе кочегарсем вырăнĕнче ĕçлеме тытăнчĕç. Çĕнĕ ĕçре вĕсем арçынсенчен кая юлса пымаççĕ. Цех начальникĕ Первов юлташ фронта тухса кайсан, ун вырăнне бухгалтер Волков юлташ ĕçлеме тытăнчĕ. Çапла ĕнтĕ, вăл цеха ертсе пынă хушăрах бухгалтери ĕçне те туса пыма ĕлкĕрет.

Артель членĕсен шухăш-кăмăлĕ вăл — производство планне срокчен тата пысăк пахалăхпа тултарасси. Йăлтах фронт валли, йăлтах фронт интересĕсемшĕн! Кашни работник хăй тăрăшса ĕçленипе тăван çĕршыв оборонине ытларах тĕреклетме, Хĕрлĕ Çара пулăшма, ирсĕр тăшмана хăвăртрах çĕнтермелле тума тăрăшать.

«Кооплеспром» артелĕ 1939 çултанпа Чăвашдревпромсоюзăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăй аллинче тытса тăрать. 1934 çултанпа, пĕр улшăнмасăр, артель правлени председателĕ пулса Кудяков юлташ ĕçлет. Çак пултарулăллă руководитель çинчен асăнмасăр иртме çук. Ĕçе тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе пысăк опыт пухнă. Кам ăçта тата мĕнле ĕçленине яланах лайăх пĕлсе тăрать. Членсем кăларса тăратнă ыйтусене яланах вăхăтра татса парать. Ĕçе кăтартуллă организациленĕшĕн ăна «Акитивист промкооперации» значок парса наградăланă.

В. ВИШНЕВСКИЙ.

Колхозниксен отвечĕ

ÇЕМĔРЛЕ. Колхозниксен пĕр шухăш—фашизма аркатма Хĕрлĕ Çара, Флота, Авиацине кирлĕ таран пулăшасси, хамăран тыла çирĕплетесси.

Ĕçре производствăллă çĕкленӳ пуçланчĕ. Колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлас, вăйлă тырпул пухса илес тĕлĕшпе тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз аш-какай памалли II-мĕшпе III-мĕш квартал планĕсене пурнăçланă.

Колхозра халĕ хĕрсех çум çумлас ĕç пырать. 140 гектар çинчи тулăна, сĕлĕне тата урапана çумкурăксенчен тасатнă. Халь йĕтĕне тата клевера çумсенчен тасатаççĕ. Ку ĕçе шкулта вĕренекенсемпе ваттисем те хутшăннă.

Мĕнпур пушă вăя тислĕк тăкма, çĕртме тума уйăрнă. Кашни колхозник хăй вырăнĕнче ĕçлет.

Тислĕк турттарнă тата çум çумланă ĕçе вĕренекен çамрăксене явăçтарнă. Пĕрремĕш бригадăри А. Капитонов, Н. Васильев, И. Иванин, С. Николаев, М. Еремеев, М. Николаев пионерсем кашни кун колхоз производствинче ĕçлеççĕ.

Аслăрах классенче вĕренекен А. Мартышин, В. Петров, Г. Таньков трактор çинче плугаръсем пулса ĕçлеççĕ. 7-мĕш класра вĕреннĕ Мирон Колшелов, тракторпа ĕçлесе, хăйĕн кулленхи нормине ытлашшипех тултарса пырать. Иван Шангеев юлташ фронта фашистсене хирĕç вăрçма тухса кайнă хыççăн, ун вырăнне лашасем пăхма çамрăк В. Шогин юлчĕ.

Фронта кайнă юлташсене ваттисем тата хĕрарăмсем уláштараççĕ.

Ватă колхозниксем хăйсен ачисене, юлташĕсене фронта ăсатса колхоз производствинче тимлĕн ĕçлеме пулăшаççĕ.

И. Николаев юлташ империализмлă тата граждан вăрçисенче те пулнă. Унăн пĕр ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта. Аслă ывăлне—Федора халь фронта фашистсене хирĕç вăрçма кăларса ярса, вăл çапла каларĕ:

— Эпĕ хам ывăлсемшĕн савăнатăп. Манăн икĕ ывăл халĕ фронтра çапăçаççĕ. Кăçал тепĕр ывăлăм—Александр вăтам шкултан вĕренсе тухрĕ, вăл та Хĕрлĕ Çара кайма хатĕр. Хам эпĕ пилĕк çул хушши колхозра Хĕрлĕ Çар валли уйăрнă лашасене пăхатăп. Ман лашасем лайăх. Эпĕ Хĕрлĕ Çара ултă лаша патăм тата ултă лаша паян-ыран пама хатĕр. Пирĕн тыл çирĕп. Кирлĕ пулсан эпĕ хам та алла пăшал тытса тăшмана хирĕç çапăçма хатĕр, — терĕ вăл.

С. БАТЬКОВ.

Заем укçи пухаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Выла-Базарĕнчи «Хастар» колхозра Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемшăн çак кунсенче 500 тенкĕ укçа пухса панă.

В. ПРОКОПЬЕВ.

Производствăра тăрăшса ĕçлĕр!

Июнĕн 22-мĕшĕнче фашистла Германин сĕмĕр йыттисем вăрçă пуçланă çинчен пĕлтермесĕр пирĕн тăван çĕршыв çине бандитла килсе тапăнчĕç. Кун пек ирсĕр япала çĕр çинче халиччен те пулман.

Пире халиччен нимĕнле тăшман çĕнтереймен, малашне те çĕнтерес çук! Эпир, паттăр красноармеецсем, краснофлотецсем, политработниксем, никам çĕнтерейми авиацин Сталинла соколĕсем тăван çĕршыв чиккисене çирĕппĕн сыхлатпăр, тăшмана ним шеллемесĕр таптатпăр. Эпир çĕнтеретпĕрех!

Рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, производствăра тăрăшса ĕçлĕр, Хĕрлĕ Çара пулăшăр, эпир кунта фашизма хирĕç хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешетпĕр.

М. КАРИМОВ,
Кĕçĕн сержант.
Действующи арми.

Шкул ачисем колхозсене пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Колхозсенче государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарас, тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕçсем вăйлансах пыраççĕ. Хальхи вăхăтра 17 колхозра государствăна тĕштырă параççĕ. 13 колхозра çăмарта памалли обязательствăсене тултарнă.

Фронта каякан арçынсен вырăнĕсене хĕрарăмсем йышăнаççĕ. Машинно-тракторнăй станцинче çак кунсенче тăватă хĕрарăм тракторпа ĕçлеме тытăнчĕç.

Чылай çĕрте шкул ачисем колхозсене пулăшаççĕ. Хусаккасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче тата «Победа» колхозра шкул ачисем çум çумланă, уя тислĕк кăларнă çĕрте активлăн хутшăнса ĕçленĕ.

«Звезда» колхозра ытти ĕçсене туса пынипе пĕр вăхăтрах, выльăх-чĕрлĕхсем валли çулçăллă апат хатĕрлеççĕ.

Районри колхозсенче обществăллă пурлăха хурал тăрассине вăйлатаççĕ.

Г. САХАЛКИН.
ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

Физкультура организацийĕсен хăйсен ĕçне хăвăрт çĕнетсе урăхлатас пулать

Германин фашистла йыттисене хирĕç пирĕн тăван çĕршыв отечественнăй вăрçа тухрĕ. Çак вăхăтра дисциплинăллă, çирĕп сывлăхлă, вăйлă кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе Совет Союзĕнчи физкультура организацийĕсем умĕнче çавтери пысăк задача тăрать.

Физкультура организацийĕсен задачи — физкультурниксене Осоавиахим организацилеме вĕренӳ подразделенисене тата тактикăллă вăййисене хутшăнтарасси, шывра ишес, пăшалтан тĕл перес, граната ывăтас, велосипедпа чупас тĕлĕшпе ăмăртусем туса ирттересси пулать.

Кĕперсемпе çулйĕрсене юсас тĕлĕшпе вырăнти организацисем ирттерекен çсене физкультурниксене явăçтарни кирлĕ. Çăвăн пекех сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕренес ĕçе физкультурниксен активлăн хутшăнмалла.

Медсестрасем ытларах хатĕрлесе санитарнăй дружинăсем организацилеме физкультурницăсене РОКК организацисене явăçтарни кирлĕ. Активистка-физкультурницăсенчен инструкторсем хатĕрлеме семинарсем ирттерес пулать. Вăл инструкторсем чирлĕ çынсене сыватас енĕпе госпитальсенче те ĕçлеме пултарччăр.

Пирĕн республикăри физкультура организацийĕсем те ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентес енĕпе лартнă задачасене пурнăçлама пултараççĕ. Чылай коллективсем физкультурниксене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе паха ĕçсем туса пыраççĕ.

Альгешри (Шупашкар р.) промартельре ĕçлекен çамрăксем июнĕн 30-мĕшĕнче граната ывăтас енĕпе ăмăрту туса ирттерчĕç. Унта 24 çамрăк хутшăнчĕ. Кунтах эстафета пулчĕ. Шупашкарти промартельсенче ĕçлекенсем июлĕн 5-мĕшĕнче каçхине военизированнăй поход турĕç. Çăвăн пекех Туçире (Çĕрпӳ р.) граната ывăтас тĕлĕшпе массăллă ăмăрту ирттерчĕç.

Чылай коллективсем пăшалтан тĕл перес тĕлĕшпе те ăмăртусем ирттерчĕç. Ку ăмăртусенче Шупашкарти «Промполиграф» (руководителĕ Шиманский), Красноармейски районри Енĕшкассинчи (руководителĕ Гавриилов) тата Йĕпреçри «Кооплеспром» артель çумĕнчи (руководителĕ Петров) коллективсем мала тухрĕç.

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан тата «Вышивка» артельсенчи физкультурницăсем санитари ĕçне вĕренеççĕ. Вĕсем производствăра ĕçленĕ хушăрах медсестрасем пулаççĕ.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине ответлесе, республикăри физкультура коллективĕсен ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентес тата физически енĕпе хатĕрлес ĕçе урăхлатса çĕнетмелле.

К. НИКИШЕВ.

Хĕрлĕ Çар валли лайăх лашасем ӳстерер

Ялхуçалăх продукчĕсен заготовкисемпе закупкисене ирттерес политикăри улшăнусем çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх ĕçлесе, пирĕн колхозсем лаша ĕрчетессине нумай лайăхлатрĕç. Çак енĕпе тунă ӳсĕмсене Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче те лайăх кăтартса панă. Республикăри çĕршер колхозниксем выставкăра пулса колхозсенче пăхса ӳстернĕ паха лашасене курчĕç, çак ĕçри мастерсен мухтавлă опычĕсемпе паллашрĕç.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ипподромĕнче иртнĕ çулта хăвăрт чупакан лашасен ăмăртăвне иртнери пирĕн республикăри колхозсенче чылай рысаксем пуррине кăтартса пачĕ. Кăçал пирĕн колхозсенчи рысаксем Мускаври ипподромра хăвăрт чупнине кăтартса параççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Майăн 1-мĕш» колхозри «Заветный» ятлă лаша кунта колхозсенчи виçĕ çул тултарнă рысаксем енĕпе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Хальхи вăхăтра çак «Заветный» ятлă лаша 1.600 метра 2 минута та 18 секундăра чупса тухать. Çак результат тата ытларах лайăхланасса шанма пулать.

Мускаври ипподромра çăвăн пекех Сĕрне районĕнчи «Борец» колхозăн «Аван» ятлă лаши те начар мар результат кăтартрĕ. Вăл 1.600 метра 2 минута та 24 секундăра чупса тухать.

Кун пек лайăх лашасем пирĕн республикăра çĕршерĕн шутланаççĕ. Хĕрлĕ Çара таса сывлăхлă, вăйлă тата чăтăмлă лашасем кирлĕ. Çăвăнпа та ĕнтĕ лаша ĕрчетес тĕлĕшпе малашне те тăрăшса ĕçлемелле. Лаша ферми çук колхозсенче виçĕ çул тултарман тихасемпе Хĕрлĕ Çар фондне уйăрнă лашасене пăхма ятарласа бригадăсем организацилемелле. Çамрăк тиха ăнăçлă ӳсесси вăл—кĕçре тата уйрăмăнах ăйăр лайăх пулнинчен те нумай килет.

Пĕтĕ кĕсрене çутă тата ăшă витере зоотехника вĕрентнĕ йĕркесем тăрăх пăхса усрамалла. Хăмличчен 6 уйăх юлсан çăмăл ĕçсенче кăна кӳлме юрать, икĕ уйăх кăна юлсан нимле ĕçе те кӳлме юрамасть. Пĕтĕ кĕсресене кĕтӳ çӳретмелли вырăнта çӳретни усăллă. Хăмланă хыççăн кĕсрепе çăмăл ĕçсенче усă кураççĕ. Кун пек чухне кашни икĕ сехет хушшинче çамрăк тихана ĕмĕртмелле. Пĕр çул тултаричен тихасем хăвăрт ӳсеççĕ. Çăвăнпа та вĕсене çав вăхăтра уйрăмах лайăх пăхмалла. Хĕл вăхăтĕнче тихана сивĕ, таса мар тата нӳрĕ тăракан витере усрама юрамасть. Тасатса тăмалла та та час-часах прĕке илсе тухса уçăлтармалла. Çулла тихасене кĕтӳ çӳремелли вырăнсенче çӳретмелле. Ирхине хире е улăха илсе тухас умĕн тата каçхине сĕлĕ памалла. Хăшпĕр вырăнсенче лашасене тăлласа çӳретнине курма пулать. Кун пек тума юрамасть, лаша урисем пăсăлма пултараççĕ. Кĕсресемпе ăйăрсене пĕрле çӳретмелле мар. Ахалĕн икĕ çулхи кĕсресемех пĕтĕленме пултараççĕ. Паллах, кун пек чухне лайăх тиха çуралласса кĕтме çук.

Лаша чĕрнисене тасатасси çинчен нихăçан та манма юрамасть. Тихасене чĕрнене тасаттарма пĕчĕкренех хăнăхтарни кирлĕ. Уйăх е уйăх çурă хушшинче пĕр хут тасатмалла.

Чĕрнесем тасатмалли çĕçĕ, щетка, скребница тата сукно татăкки кашни конюха кирлĕ инвентарьсем пулса тăраççĕ. Кашни конюхăн лашасене зоотехника вĕрентнĕ тăрăх пăхмалла.

Партипе комсомол организацисен, çĕрĕç организсенчи работниксен лаша ĕрчетес ĕçе тивĕçлипе ертсе пымалла. Çапла ĕçлесен эпир Хĕрлĕ Çара юрăхлă лашасем кашни колхозра кирлĕ чухлĕ ӳстерсе хатĕрлĕпĕр.

Л. ИЛИВАНОВ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн коневодство Управленийĕн начальникĕ.

ĂМĂРТУЛЛĂ ÇАР

(Юрă*)

Паттăрăн сывлатпăр,
Найкăшулла мар,
Тимлĕ те ударлă
Амăртуллă çар.
Тухрăмăр ĕçе те, —
Пĕр тытнă ĕçе,
Эпир туми мар.
Çĕкленет хула халь,
Çĕкленет çĕн ял,
Çĕкленет ĕç çарĕ —
Мĕнпур чĕр вăй-хал.
Ленинла ку никĕс,
Сталинла вăй-хал —
Пирĕнти вăй-хал.
Аслă çулпуç Сталин,
Парти чĕннипе
Шăтса тухнă эпĕр
Пинĕ-пинĕпе.
Вĕçĕмсĕр бригадăн,
Хăвăрт та типтер
Хĕмленсе ĕçлер.
Çĕнĕ тум уйăхрĕн,
Çĕнĕ тум хулан —
Пĕрлешӳллĕ çирĕп
Вăй-халпа тулсан.
Куллен-кун ӳсет вăл,
Вăйлă та хастар
Амăртуллă çар.
Паттăрăн утатпăр —
Ĕçе ир çинче,
Хавассăн юрлатпăр
Ĕçĕмĕр çинчен:
Тухрăмăр ĕçе те, —
Пĕр тытнă ĕçе
Эпир туми мар!
Советсен çĕршывĕн
Пурнăç-телейне
Тискер, ирсĕр Гитлер
Илесшĕн туртса.
Эпир кар тăратпăр,
Хĕçпăшал тытса,
Хĕрлĕ Çар ретне.
Паттăрăн тухатпăр
Фашистсем çине,
Аркатса тăкатпăр
Гитлер бандине.
Тухрăмăр ĕçе те
Пĕр тытнă ĕçе
Эпир туми мар;
Урнă тăшмана —
Ирсĕр Гитлера
Эпир çĕнми мар!

Н. ВАСЯНКА.

*) Т. Хирбиков çырнă «Амăртуллă çар» кĕввипе юрламалла.



Сĕнтĕрвăрри МТС трактористчĕ И. Д. Андреев тата прицепщик И. В. Федоров «Красный Волгарь» колхоз хирĕнче тислĕк тăкнă уя сухалаççĕ.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Суя хыпарсем саракансене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешер

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмахра, пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтерме тата тăшмана çĕмĕрсе тăкма мĕнле мерăсем йышăнма кирли çинчен тĕплĕн каларĕ. «Нимĕн çинчен те шухăшламасăр пурăнма пăрахмалла, вĕсем хăйсене мобилизациленмелле тата хăйсен пĕтĕм ĕçне урăхлатса, вăрçă вăхăтĕнчи пек, çĕнĕ йĕркепе туса пымалла, тăшмана каçару пулмалла мар»,—терĕ пире çулпуç аслă Сталин.

Тăшман пирĕн çĕршыв çине вилĕм акма, хуласемпе ялсене ишĕлтерме ĕмĕтленет. Тăшман ултавлă та чее, вăл улталас тата суя хыпарсем сарас тĕллĕпе опытлă. Фашистсем пирĕн тыла парашютист-диверсантсене антарса хăварасçĕ, хăйсен шпионĕсене ярасçĕ. Çак çĕлен-калтасем пирĕн тылра диверсиллĕ ĕçсем организацилеме тăрăшасçĕ. Вĕсем кая юлнă çынсене тĕрлĕ майсемпе, укçа-тенкĕ парса, улталаса, хăйсен диверсиллĕ ĕçĕсене тума явăçтарасшăн. Паллах, кам та кам тăшман провокацийĕ хыççăн каять, кам та кам халăх хушшинче шиклĕх кăларакан суя хыпарсем сарма пăхать, вăл пирĕн тăван çĕршывăн обороninе тĕреклетме чăрмав кӳрет, тăшмана пулăшать.

1941 çулти июлĕн 6-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕ «Вăрçă вăхăтĕнче халăх хушшинче шиклĕх кăларакан суя хыпарсене сарнăшăн ответ тыттарасси çинчен» Указ кăларчĕ. Çак Указ тăрăх, вăрçă вăхăтĕнче халăх хушшинче шиклĕх кăларакан суя хыпарсене сарса айăпа кĕнĕ çынсене 2 çултан пуçласа 5 çула çити срокпа тĕрмене хупса лартмалла.

Пирĕн аслă çулпыври совет патриочĕсем çак Указа чĕререн хапăл туса кĕтсе илчĕç. Вĕсем мĕнпур йышши дезорганизаторсене, дезертирсене, паникерсене, тĕрлĕ суя хыпар саракансене хирĕç кĕрешме мобилизациленчĕç.

Кашни совет гражданинĕн элекçĕсене тата суя хыпарсем саракан çынсене хирĕç вĕçĕмсĕр кĕрешсе пымалла, ун пек çынсем çинчен çийĕнчех Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсене пĕлтерес пулать.

Юлашки вăхăтра час-часах урам хушшинче «пуçтаракансем» тата «уксак-чăлахсем» тĕрлĕ юрăсем юрласа тăнине тĕл пулма пулать. Иртсе çӳрекен граждăнсем вĕсене пулăшма тăрăшасçĕ. Çапла вара, çак «пуçтаракансемпе» «уксак-чăлахсем» каçхине рестораннсене, пивнойсене ĕçме каяççĕ. Юлашкинчен хулиганла ĕçсем тăваççĕ, тавлашасçĕ, кирлĕ мар сăмахсем сарасçĕ.

Совет гражданинĕн çакна ăнланмалла: пирĕн çĕршывра ыйткаласа çӳрекенсем пулмалла мар, вĕсене валли Совет правительстви ятарласа инвалидсен çурчĕсем уçса панă. Урам хушшинче çапкаланса çӳрекенсем вĕсем хăйсем пĕлнĕ пек, ирĕкре çапкаланса çӳреме юратаканскерсем çеç. Цыгансем пирки те çавнах каламалла. Ĕçлеме юратман цигансем çеç вырăнтан вырăна куçса çӳреççĕ. Совет правительстви вĕсене тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе тăранса пурăнма пур условисене те туса панă. Хăшпĕр граждансем вĕсене юмăç пăхтарасçĕ, унăн укçа парасçĕ, теприсем кĕпе-тумтирсем те паркаласçĕ. Çав хушăрах хăшпĕр цыгансем хушшинче шпионсем те пулма пултарасçĕ.

Çавăнпа та, урам хушшинче ыйткаласа çӳрекенсемпе тата юмăç пăхма юратакан цыгансемпе нимĕнле сыхăну тавращĕ те пулмалла мар.

Пĕтĕм халăхăн Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха пурнăçа кĕртме мобилизациленмелле. Фабрикасенче, заводсенче, учрежденисенче милици органĕсене пулăшакан бригадăсем организацилесе, большевикла заданисене пурнăçа кĕртме тăрăшăр. Социализмлă Совет разведкине пур енчен те сирĕплетсе пырăр. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн милици органĕсене пулăшакан бригадăсем организацилесе, большевикла заданисене пурнăçа кĕртме тăрăшăр. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсенче ĕçлекен сотрудниксем ертсе пынипе оперативлă ĕçе хутшăнса ĕçлĕр. Предприятисемпе учрежденисенче руководительсен социализмлă харпăрлăха хытă сыхласа усрамалла.

С. АНДРЕЕВ.

Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ.

Шкул ачисен патриотизмĕ

Фашистла вăрă-хурахсене хирĕç каяр çапăçусем пынă вăхăтра пирĕн совет халăхĕн патриотизмĕ, вăл хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр юратса хисеплени уйрăмăнах уççăн палăрать. Пĕтĕм совет халăхĕн ĕмĕчĕ-шухăшĕсем тăван çĕршыва сыхласси çинче, пирĕн таса çĕре хăйсен юнлă урисемпе баралама пикенекен сĕмсĕр вăрă-хурахсене çĕмĕресси çинче.

Çак вăрçăн йывăр кунĕсенче кашни ĕççынни, çарта çапăçакан паттăр боецсенчен пуçласа ватă стариксемпе çамрăк ачасем патне çитичченех, хăйĕн çĕршывне усăллă пулма, çĕршыв тĕрекĕшĕн пĕтĕм вăйне пама тăрăшать.

Çара кайма çул çитмен çамрăк пионерсемпе шкул ачисем фронта кайнă ашшĕсем, пиччĕшĕсем вырăнне колхозсене, совхозсене, предприятисене ĕçлеме тăраççĕ. Республикăри шкул ачисем пиншерĕн ялхуçалăх ĕçĕсенче ĕçлеççĕ.

Шупашкар районĕнчи Карачурари туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем çуртыррисене çумкурăксенчен тасатас, пахча-çимĕссене шăварас çĕрте активлăн ĕçлеççĕ. Ку ĕçре вĕсене Свинцова тата Степанов учительсем ертсе пыраççĕ.

Тулик-Хураскинчи ҫăтам шкулта вĕренекенсем колхозра çум çумлас ĕçре, хире тислĕк кăларас ĕçре пулăшнă, пахча-çимĕссене шăвараççĕ.

Иккассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 21 çын кунсерен çул çинче ĕçлеççĕ. Кану вăхăтĕнче колхозниксене хаçатсем, журналсем вуласа параççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ, спектакльсем лартса параççĕ.

Чылай шкулсенче вĕренекенсем ялхуçалăх ĕçĕнче ĕçлеме бригадăсем организациленĕ. Салари (Куславкка р.) туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 14 ача колхоз лашисене пăхма бригада организациленĕ.

Вĕренекенсен звенисем, бригадисем ĕç тухăçлăхĕн паха тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Çичĕ Пӳртри (Октябрьски р.) туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем июлĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа звеносем организацилесе виçĕ кун хушшинче 111 гектар çинчен çумкурăксене çумласа тасатнă, вĕсем ĕç нормине 125 процент тултарса пынă.

Хулари шкулсенче вĕренекенсем те çуллахи шкул вăхăтне çĕршывăн усăллă ирттерме тăрăшасçĕ. Шупашкарти иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекенсем 60 ача Çĕрпӳри селекци станцине ĕçлеме тухса кайнă, 30 çын Мами совхозĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем куллен нормăна 150—200 процент таран тултарса пыраççĕ.

Пăрачкаври вăтам шкулта вĕренекен 54 ача совхозра ĕçлеççĕ. Çак совхозах Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем тухса кайнă.

Шкул ачисен çак пархатарлă пуçарăвне малалла татах та анлăрах сарса пымалла. Çывăх вăхăтрах хирти тырăсене пуçтарса кĕртес ĕçсем пуçланаççĕ. Çак хĕрӳ вăхăтра 7, 8, 9, 10-мĕш классенче вĕренекенсене ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлеме организацилемелле. Шкул директорĕсен вĕренекенсенчен бригадăсем, звеносем организацилесе вĕсене колхозсене, совхозсене ĕçлеме ярас пулать. Мĕншĕн тесен, уйра ăнса пулнă тырпула кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртесси пĕтĕм ĕçхалăхĕн, çав вăхăтрах шкулсен те хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Учительсен çамрăк патриотсен ĕçне ертсе пымалла. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн тылне çирĕплетесси хальхи вăхăтра кашни совет гражданинĕн тĕп задачи пулса тăнине пĕр самантлăха та асран ямалла мар.

А. ОТАЧКИН.

Колхозниксен хастарлăхĕ ӳссех пырать

ВАРМАР. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ, халăхсен аслă çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх калани колхозниксене татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Колхозсемпе колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ.

Анаткасри «Париж Коммуни» колхоз тырпула лайăх пăхса çитĕнтерессипĕн кĕрешет. Хальхи вăхăтра çум çумласа пĕтернĕ. Çум çумлас ĕçре куллен 100—120 çын ĕçленĕ. Ку ĕçре пуçламăш шкулта вĕренекен К. Алексеева, А. Максимова, М. Афанасьева пионерккăсем хăйсен активлăхне палăрмаллах кăтартрĕç. Вĕсем нормăсене çитĕннисемпе танах тултарса пычĕç.

Кăçалхи вăйлă тырпула пухса кĕме хатĕрленнипе пĕрлех, колхоз çитос çулхи тырпул тухăçлăхне ӳстерессинĕн те кĕрешет. Обществăллă витесенчи тата колхозниксен килĕсенчи тислĕке уя кăларнă.

Тырпула пухса кĕме хатĕрленнĕ май виçĕ витнĕ итем тунă, ялхуçалăх машинисене юсанă, 39 лаша валли 41 урапа тунă. Çурласемпе çавасем те хатĕр.

Арапуçĕнчи «Арабось» колхозра та колхозниксен активлăхĕ ӳссех пырать. Тырпула пухса кĕме хатĕрленнĕ вăхăтрах, колхоз пысăк пĕве пĕвелет. Унта куллен 100 çынна яхăн ĕçлеççĕ. Гитлер орди пирĕн çĕршыв çине тапăннине хирĕç ответлесе, вĕсем ĕç тухăçлăхне пысăккăн ӳстереççĕ. Вера Николаева, Алефтина Андреева, Анна Николаева, Ксения Васильева, Матрена Николаева т. ыт. колхозницăсем те кулленхи нормăна 110—150-шар процент тултарса пыраççĕ.

Колхозăн обществăллă хуçалăхĕ ӳссех пырать. Халĕ пысăк клуб, тырă хумалли амбарсем тăваççĕ.

Районри пытти колхозсенче те колхозниксен хастарлăхĕ ӳссех пырать.

И. СТЕПАНОВ.

ПВХО нормине пама вĕренетпĕр

Шупашкарти учительсен пĕлӳне хăпартмалли институтра вĕренекен студентсем тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма çине тăрсах вĕренеççĕ. Санитарипе оборона ыйтăвĕсем тăрăх вĕреннисене халĕ практикăпа çыхăнтарса пыратпăр. Ку ĕçре пире Васильева врач пысăк пулăшу парать. Кунсăр пуçне, июлĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа ПВХО нормине пама занятисем ирттерме пуçларăмăр. Занятине курсантсемпе преподавательсем активлăн çӳреççĕ. Малтанхи занятинче военрук Максимов юлташ «Противохимическая защита» темăпа лекци вуласа пачĕ.

О. ЯРУСОВ.

1812 ÇУЛТИ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ

«Мăнаçланса кайнă тăшман тапăннине пирĕн халăхăн пĕрремĕш хут кăна мар курма тивет. Хăй вăхăтĕнче Наполеон Россия çине поход тунинне хирĕç пирĕн халăх отечественнăй вăрçăпа ответленĕ, Наполеона вара парăнтарнă, вăл хăйĕн вилĕмĕ патне пырса тухнă». Çапла калана В. М. Молотов пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине Германин фашистла тискер правителĕсем тапăннă май хăйĕн сăмахĕнче.

1812 çулти отечественнăй вăрçă вăлвырăс халăхĕ хăйне çĕнтерсе чура тума ĕмĕтленнĕ тăшмана хирĕç паттăрăн кĕрешнине кăтартакан чи паха страницăсенчен пĕри пулса тăрать.

Францири буржуази, Наполеон правительстви ертсе пынипе власть патне пырса революцие пуçтарса лартнă хыççăн, ют çĕрсене тытса илес шутпа вăрçăсем пуçласа янă. Пĕтĕм тĕнчене тытса илсе чура тума ĕмĕтленсе, Наполеон 1811 çулта çапла каланă: «Пилĕк çултан эпĕ тĕнче господинĕ пулатăп; пĕр Россия çеç юлать ĕнтĕ, анчах эп ăна таптаса лапчăтатăп», — тенĕ.

1812 çулти июнĕн 24-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе) Наполеон Бонапарт, вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕрех, хăйĕн çур миллионлă çарĕпе Россия çине килсе кĕнĕ, вăл ĕнтĕ Европăри ытти нумай халăхсене чура тунă пекех Российăна та чура тăвасшăн пулнă.

Малтанхи кунсенчен пуçласах, хăйĕн тăван çĕршывне ют çĕршывран килнĕ захватчиксенчен хӳтлеме пĕтĕм вырăс халăхĕ çĕкленсе тăнă, ăна белорусс тата литва халăхĕсем хĕрӳллĕн пулăшнă. Россия, Литва тата Белорусси ялĕсемпе хулисенче пурăнакансем хăйсен килĕсенчен тухса кайнă, хирсенчи тырпулсене пĕтернĕ, пĕр çын юлмиччен хĕçпăшалланса, Наполеонăн чуралăхпа нацийĕ пусмăр кӳрекен çарĕсене хирĕç çĕкленсе тухнă. Наполеона хирĕç вăрçă пĕтĕм халăх вăрçи, нацийĕ ирĕклĕхшĕн пулса пыракан вăрçă пулнă. Ку вăл—чура тăвакансене хирĕç тăнă вăрçă пулнă.

Стратегиллĕ плансене пăхăнса, вырăс çарĕсем çапăçусемпе çĕршыв ăшнелле чакса пынă. Чакса пыракан çарсем, Александр I патша тата Пруссия тăмсай генералĕ Фуль планĕ тăрăх, пĕр-пĕринчен уйрăм пулнă. Кун пек пулни тăшман çарсене уйрăмăн-уйрăмăн аркатас хăрушлăх кăларса тăратнă. Июлĕн 22-мĕшĕнче тин вырăс çарĕсем Смоленск патĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешме пултарнă. Пĕтĕм çарпа командовать тăвасси пĕрремĕш армин командующийĕ пулнă Барклай де Толли аллине куçнă,—вăл чин тĕлĕшĕнчен аслăрах пулнă. Иккĕмĕш армипе Багратион—вырăс çарĕнчи чи талантлă таттăр генералсенчен пĕри командовать тунă.

Çакăнта, Смоленск патĕнче, таттăр вырăс халăхĕн çарĕ Наполеон вăрçисен историнче Наполеонăн тата унăн «чаплă çарĕн» вăрçăри авторитетне пĕрремĕш хут хавшатнă.

Наполеон Смоленск çине пит те хăвăрттăн пырса çапса, вырăс çарĕ малалла чакмалли çула татса, ăна çавăнтах пĕтерсе хума тăнă.

Французсем Смоленск çине харăссăн 150 тупăран пенĕ, хăйсен тĕп вăйĕсемпе татти-сыпписĕр атакăсем тунă. Хулана хӳтлекенсем—Раевски генерал корпусĕн, унтан Дохтуров корпусĕн салтакĕсем, хулара пурăнакан çынсем хĕрӳллĕн пулăшнипе, юлашки минутăчченех хăйсенчен нумай йышлă тăшмана хăйсен ирсĕр планне пурнăçа кĕртме паман. Августăн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, вырăс çарĕсем хуларан тухса кайнă. Смоленск хулинчи патриотизм туйăмĕпе хавасланнă халăх та хуларан тухнă, усал тăшманăн аллине нимĕн те ан лектĕр тесе хăйсен пурлăхне пĕтернĕ, çурчĕсене çунтарса янă.

Смоленска илсен, Наполеонăн вырăс халăхĕпе вăрçма пит те йывăр пулнине йышăннă, мир тăвас пирки калаçма пуçлама тӳр килнĕ. Анчах Россия мир çинчен калаçассине пачах та йышăнман. Вара Наполеон Мускав çинелле кайнă, вăл столицăна тытса илнипе Российăна парăнтарнине йышăнтарасшăн пулнă.

Августăн 20-мĕшĕнче вырăс çарĕпе командовать тăвассине вырăссен аслă полководецĕ Михаил Илларионович Кутузов илнĕ. Наполеона аркатас ĕçре вăл уйрăмăнах пит те паллă вырăн йышăнса тăнă вара.

Кутузов вырăссен çарĕнче Павел тата Александр патшасем тунă йĕркесене курайман, Александр I патшан вăрçă ĕçĕнчи таланчĕсене пит те начăрран хаклани, вырăс салтакĕн пурнăçне çăмăллатассишĕн кĕрешнĕ. Çаксемшĕн Кутузова патша юратман. Анчах та обществăн шухăшĕсене, обществăн кăмăлне пула, унăн ирĕксĕрех Кутузова главнокомандующи тумалла пулнă.

Кутузова главнокомандующи тунине çар та, халăх та пысăк хавасланăпа йышăннă, вăл çак пĕтĕм халăх вăрçине кирлĕ пек ертсе пырса тăшмана аркатма пултаракан çын пулнине ĕненнĕ. Çара пырсанах, Кутузов генеральнăй çапăçу хатĕрлеме тытăннă, — çапла вара çав çапăçу вырăс çарĕ пит те çирĕп кăмăллă пулнине, вăл тăшмана аркатса тăкма хатĕррине, Наполеон Российăна çĕнтерсе илме пултайманнине кăтартнă.

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче вырăс çарĕ Можайскран 12 километрта, Мускавран 120 километрта ларакан Бородино ятлă ял патĕнче позицисем йышăннă. Вырăссен 120 пин çынлă çарне хирĕç — Наполеонăн 130 пин çынлă çар пулнă, çав çарпа Наполеон сентябрĕн 5-мĕшĕнче вырăссен укрепленисем тунă позицийĕсем—Шевардинский редут çине, сентябрĕн 6-мĕшĕнче вырăс çарĕ паттăрла хӳтлесе тăракан Семеновски е Багратион флешĕсем (укрепленисем) çине атакăсем тума тытăннă.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче ирхине Наполеон тĕп вăйсене Семеновски флешьсем çине ярса, пĕтĕмĕшле атака пуçланă. Флешьсене хӳтлекенсем, отечественнăй вăрçă геройĕ Багратион ертсе пынипе, тăшмана хирĕç пит те паттăрăн тăнă. Саккăрмĕш атака хыççăн тин, Багратиона вилмеллех суранланă хыççăн, французсем укрепленисене илме пултарнă. Раевский батарейине хӳтленĕ çĕрте те вырăс çарĕн воинĕсем тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнă. Вырăссен утлă çарĕ те пит те хăватлăн çапăçнă. Бородино патĕнчи çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра, Кутузов вара Уваров генерал командовать тăвакан кавалери чаçĕсене тата Платов командовать тăвакан Дон казакĕсене тăшманăн тылне янă. Çакă вара тăшмана пит те пысăк сиен кӳнĕ, Раевский батарейине хӳтлекенсене тăшманăн таттисĕр тăвакан атакисене каялла хăваласа яма пулăшнă.

Бородино хирĕнчи çапăçу каç пуличченех пынă. Наполеон вырăс салтакĕсен иксĕлми паттăрлăхне, çирĕплĕхне пĕтерсе хума хăйĕн çарĕн мĕнпур вăйĕсене пухнă, анчах усси пулман. Çухатусем пулнă пулин те, салтаксемпе вĕсен боевой командирĕсем тăшман тапăннинне аркатнă. Французсен çарĕ сайраланса пынă. Наполеонăн кавалерине пĕтĕмпе тенĕ пекех стройран кăларнă. Наполеон умне гвардине — хăйĕн юлашки шанчăкне çухатас хăрушлăх тухса тăнă, çавăнпа та унăн çапăçăва чарса, йышăннă вырăнсене хăварса, хăйĕн малтанхи позицийĕсем çине, Колоча шывĕ хыçне чакса тăмалла пулнă. Французсем 54 пин çын таран çухатнă. Хăй çапăçма пултарнине çухатмасăр, вырăс çарĕ пит те пысăк сĕнтерӳ тунă. «Французсен çарĕ вырăссен çарĕ çине çапăнса арканчĕ», — тенĕ Ермолов генерал. Наполеонпа унăн генералĕсем те вырăссен çĕнтерӳне, салтаксен пысăк боевой пахалăхĕсене, вĕсен хастарлăхĕпе паттăрлăхне йышăнмасăр тăма пултарайман. Наполеон хăй çапла каланă: «Манăн пур çапăçусенчен чи хăрушши вăл — Мускав патĕнчи çапăçу пулчĕ. Французсем хăйсем çĕнтерме тивĕслине кăтартрĕç, вырăссем хăйсене никам çĕнтерме пултарас çуккине кăтартма пултарчĕç», — тенĕ.

Бородино патĕнчи çапăçăва халăх питĕ лайăх астăвать, ун çинчен ăруран ăрăва калавсем кусса пыраççĕ. Бородино патĕнчи çапăçусен вырăнĕсем— вырăс çарĕн геройла паттăрлăхĕсен чĕрĕ памятникĕсем пулса тăраççĕ. Совет халăхĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсем студентсемпе шкул ачисем — вăл вырăнсене хамăр çĕршыва тăшман аллине парас марришĕн паттăрăн çапăнă, çĕршыва хăйсен кăкрисемпе, юнĕпе хӳтленĕ çулăмлă патриотсем çинчен тата тепĕр хут аса илмешкĕн кая-кая кураççĕ.

Çапăçу хыççăн, пулса тăнă пур условисене те шута илсе, тата çара упраса хăварас задачăна пăхăнса, сентябрĕн 13-мĕшĕнче Филя ятлă ялта пулнă çар советĕнче Мускавран чакса каясси çинчен Кутузов решени йышăннă. — «Мускава çухатнипе Россия пĕтмест-ха, çара çухатнипе — Россия пĕтет», — тенĕ Кутузов.

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче французсем Мускава йышăннă, анчах кунта вĕсем халăхăн калама çук хăватлă патриотизм туйăмĕпе татах тепĕр хут тĕл пулнă. Халăх хăйĕн юратнă хулинчен тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерсе хурас çирĕп шанчăкпа тухса кайнă. Хулана юлнă паллă мар хăюллă çынсен—Мускавра пурăнакансен — пĕчĕк ушкăнĕсем унăн чĕринче, Кремле, паттăрăн хӳтленĕ. Мускава пушар çаварса илнĕ. Вырăс халăхĕ хăйĕн тăван хулине, тăван çурчĕсене тăшмана мăшкăллама ахаль парса хăварма пултарайман.

Наполеонăн вăйсăрланса çитнĕ çарĕ, продовольствисĕр тăрса юлнăскер, вырăс хресченĕсен партизанла анлă вăрçин çулăмĕпе çавăрса илнĕскер, хăйĕн малтанхи чапне çухатса арканса пынă. Наполеон Российăна мир туса килĕшме виçĕ хутчен сĕнӳ панă, анчах та ку ăнăçсăр пулнă. Вырăс çарĕн тата пĕтĕм халăхăн активлăхĕ ӳссе пыни Наполеона ку вăрçă хăйĕншĕн ăнăçсăр пулнине йышăнмалла тунă, вара вăл октябрĕн 18-мĕшĕнче Мускавран чакма пуçланă. Чакса пыракан тăшмана хыççăнах хăваласа, ăна пĕтерсе пынă. Наполеон Калуга çулĕпе кайма тăнă, — вăл çула çаратман пулнă-ха, ун çинче вăл хăйĕн вăйсăрланса çитнĕ çарĕ валли продовольстви тупма ĕмĕтленнĕ. Суворов тактикин никĕсĕсем çинче вĕреннĕ Кутузов Наполеонăн шухăшĕсене тавçăрса илнĕ те, Малоярославец патĕнче французсемпе çапăçса, вĕсем чакмалли çак çула картласа лартнă, французсене Смоленск çулĕпе чакмала тунă, — вăл çула малтанах çаратнă пулнă ĕнтĕ, вара çак çул Наполеонăн «чаплă çарĕн» масар шăтăкĕ пулса тăнă.

Наполеон Мускава йышăннă хыççăн, Российăна чура тума ĕмĕтленекенсенс хирĕç партизанла движени тата ытлах сарăлса, активланса пынă. Хăйĕн нацийĕ ирĕклĕхне, чысне хӳтлесе, Россиян пур кĕтессисенче те вырăс халăхĕ çĕкленсе тăнă. Тăван çĕршыва сыхлас патриотизмлă туйăм ертсе пынипе, хресченсем партизанла отрядсене пĕрлешнĕ, вара салтаксенчен тунă нумай йышлă отрядсемпе пĕрле французсен çарне питĕ вăйлăн пырапыра çапнă, обозĕсене тытса илнĕ, вĕсен тылне çĕмĕрнĕ.

Партизансен отрячĕсенче, арçынсемпе пĕрлех, хĕрарăмсем те питĕ активлă пулнă, ютçĕршывран килнĕ тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте хăйсем нимрен хăраманнине кăтартнă.

Иксĕлми çирĕплĕх, хастарлăх, çĕнтерĕве ĕненни, тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратни — çаксем ĕнтĕ вырăс халăхне никам çĕнтерейми туса, ăна отечественнăй вăрçа çĕкленĕ. Партизансен хастарлăхĕ тăшмана хăратса чĕтретнĕ, вара вăл «çак паттăр халăха ниçан та çĕнтерсе аркатас çуккине» пĕлнĕ.

1812 çулти вăрçă — пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăнине Лев Николаевич Толстой хăйĕн «Война и мир» ятлă романĕнче пит аван кăтартса панă.

Наполеонăн чаксах пыракан çарĕ хăйĕн юлашки кунĕсене пурăнса ирттернĕ. Çур миллионлă çартан 30 пин çынран ытла мар юлнă. Наполеонăн ютçĕрсене тытса илес политикине хирĕç отечественнăй вăрçă тунă вырăс халăхĕ Франци вăйлă пулса тăнине çапса çалатнă. Россия енчен, Наполеонпа вăрçни вăл — нацие ирĕке кăларасшăн вăрçни, тĕрĕс вăрçă пулнă. Вырăс халăхĕ алла хĕçпăшал тытса хăйĕн нацийĕ ирĕклĕхне хӳтлесе илнĕ, тата «французсем хĕвеланăçĕнче пуç пулса тăнине хирĕç пĕтĕмĕшлĕ восстани тума сигнал панă» (Энгельс, XVI т., II ч., 20 стр.).

Отечественнăй вăрçă геройĕ, партизансене ертсе пынă Денис Давыдов, Наполеона хирĕç вăрçни пирки çапла каланă: «Пит те пысăк пирĕн анне — Россия. Унăн пурлăхĕсем йышлă пулни унăн пурнăçĕ çине тапăннă нумай халăхсемшĕн хаклă ларнă ĕнтĕ, анчах та вĕсем унăн тĕпĕнче выртакан пур вăйсене те пĕлмеççĕ-ха.. Россия хăйĕн пĕтĕм улăпла кĕлеткипе çĕкленсе тăман-ха, — анчах эхер те вăл хăçан та пулин çĕкленсе тăрсан — хурлăх пулĕ тăшмана!» Çак пит те паха сăмахсем—пирĕн тăван çĕршывăн таса чиккисене çине тапăнакансене хаярран асăрхатарни пулса тăраççĕ.

Совет халăхĕ иртнĕ вăхăтсенче никама пăхăнмалла мар пулассишĕн хăй епле паттăрăн кĕрешнĕ историне лайăх астăвать. Вырăс çĕрĕ çинче нумай йышлă интервентсене, çав шутра пруссаксемпе нимĕссене те пĕрре кăна мар хĕнесе янисене астăвать вăл. 1240 çулта вырăс халăхĕ, Александр Невский ертсе пынипе, нимĕссен йытă-рыцарĕсене Нева шывĕ çинче çапса аркатнă. 1242 çулта нимĕссен йытă-рыцарĕсене тата тепĕр хут Чудски кӳлĕ çинче, историре çавтери паллă «Пăрлă çапăçура» («Ледовое побоище») пит те хытă аркатса, вырăс çĕрĕ çинчен пуçĕпех кăларса ывăтнă. Вырăс халăхĕ хăйĕн çарĕн çичĕ çул пынă вăрçи (1756-1761 ç. ç.) вăхăтĕнчи паттăр та хăюллă кĕрешĕвĕсене лайăх астăвать, — ун чухне «чапа тухнă» Пруссия полководецĕсем, Фридрих II хăй ертсе пынипех, вырăс салтакĕсен паттăрлăхĕ умĕнче тӳссе тăрайман, Куннерсдорф патĕнче вĕсене пуçĕпех çапса аркатнă; 1760 çулта, тăшмана çĕнтерсе, хыçалтан хăваласа пырса вырăс çарĕсем Берлина йышăнса илнĕ. Совет халăхĕ çакна та лайăх астăвать: 1812 çулти отечественнăй вăрçăра Наполеон çарĕсемпе пĕрле Пруссия полкĕсене те тĕп туса хунă.

Вырăс çарĕсен немĕссемпе ăçта тĕл пулма тӳр килнĕ, çавăнта çĕнтерӳ вырăс çарĕ енче пулнă, çавăнта Пруссин «никам çĕнтерейми» çарĕнчи цимĕн те юлман.

Çак историллĕ хаяр сехетсенче, Германин юнлă фашистла правителĕсем пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн таса чиккисене намăса пĕлмесĕр тапăннă чух, «Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм пирĕн халăх тăван çĕршывăн, чысшăн, ирĕклĕхшĕн çĕнĕрен çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçă туса пырĕ» (Молотов).

1917 çулта совет халăхĕ помещикла-капиталистла чуралăха, нацийĕ пусмăрлăх сăнчăрĕсене яланлăхах татса ывăтса, совет влаçĕ — рабочисемпе хресченсен влаçĕ турĕ. Фашизма хăйĕнпе пĕрле кӳрекен çĕнĕ чуралăха пурнăçлама совет халăхĕ ниçан та ирĕк парас çук.

Ленинпа Сталин партийĕ тавра çирĕплĕн пĕрлешсе тăракан нумай миллионлă Совет халăхĕ вăйлă та хăватлă. Вăл Сталин юлташ сыхлăх çинчен каланă сăмахсене çирĕп астуса тăрать. Фронтра тăшмана хăватлăн çапса аркатса совет халăхĕ тăшман çарĕ пирĕн тыла яракан шпионсемпе диверсантсене те ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырĕ. Фашистла варварсем темле кутăнлашсан та, тăшмана эпир аркататпăрах. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать.

Н. ГУЛЬЦЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Малалли, пуçламĕшĕ 1-мĕш страницăра)

* * *

Хĕрлĕ Çара пысăк тухăçлă ĕçпе пулăшу парасси—совет çĕршывĕн кашни патриочĕн таса тивĕçлĕхĕ. Горловка районĕнчи «Кочегарка» шахтăри горняксем калама çук пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ 2—3-шер норма параççĕ. Забойщик Яровой юлташ пĕр сменăра 20 тăваткал метр çĕркăмрăк касса кăларнă, е вăл нормăна 360 процент тултарнине пĕлтерет. Забойщиксем—Аносов, Туз, Бабенко, Кривцов тата ытти юлташсем те хăйсен нормисене çавăн пекех 300 процент ытла тултараççĕ. Ивановăри Дзержинский ячĕпе тăракан фабрикăри мастер помощникĕсем — Суханов, Тюрин, Зайцев, Карцев, Фадеев, Сафин тата Лебедев юлташсем халиччен 44-шар станокпа ĕçленĕ пулсан, халхи вăхăтра 72-шер станокпа ĕçлеççĕ.

Владимирти заводри 6-мĕш цехри çамрăк рабочисем Прибыловпа Привезенцев юлташсем ĕç нормине 600 процента çити тултараççĕ. Каменскри кирпĕч заводĕнче ĕçлекен рабочисем июнĕн малтанхи çуруйăхĕнче сменăра 60 пин кирпĕч туса кăларнă, халĕ вĕсем 90 пин кирпĕч туса кăлараççĕ. Куйбышеври заводра заводоуправление ĕçлекен хĕрачасем конторăра ĕçленипе пĕрлех цехсенче слесарьпа токарь специальноçĕсене вĕренсе алла илеççĕ. Н. станцинче кондуктор Свиногузов юлташпа машинист Миронин юлташ ертсе пынипе поезд коллективĕ çĕмĕрĕлнĕ чугунçула юсанă вăхăтра ун çине тăшман самолечĕсем пырса тапăннă. Пулеметсенчен персе тăракан, бомбăсем çурăлакан вырăнта ĕçлесе, хăюллă та паттăр железнодорожниксем поезда перегона илсе тухнă.

Ютçершыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен июлĕн 11-мĕшĕнче пулнă черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальникĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Берлинри тата фашистсем хыççăн пыракан радиостанцисем Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ г. Рузвельт çине урса кайсах тапăннине палăртнă. Ку вăл г. Рузвельт лайăх ĕç тунине пĕлтерет. Çакăн пек тапăннисене акă мĕнпе ăнлантарса памалла: г. Рузвельт, пĕр енчен, Хĕвел-анăç полушарине хӳтлесе тăмалла тăвас, тепĕр енчен Англие пулăшас шутпа, Исланди правительствипе килĕшсе татăлнă тăрăх, Гитлертан ирĕк ыйтмасăрах, Исландие пысăк çар вăйĕсене илсе пырса антарнă. Ку вăл çакна пĕлтерет: Исландие пымалли мĕнпур çулсене тата Исланди йĕриташăнчи шывсене Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар вăйĕсем сыхласа тăмалла пулаççĕ. Çакă вăл тата Гитлера пĕрмĕш хут çеç мар, тата юлашки хут та мар пырса çапнине пĕлтерет. Атлантика океанĕ г-н Гитлершăн тата унăн сывлăшрипе шыв çинчи пирачĕсемшĕн сывăх вăхăтрах татах та тăвăртрах пулса тăрать.

Малалла Лозовский юлташ Берлинри радио ĕнерхи кун пĕлтерни çинче чарăнса тăнă. Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: сывăх кунсенчех Германи сводкисенче хĕвел-тухăçĕнчи операцисем çинчен «тĕплĕн пĕлтернисем пулмаççĕ», тенĕ.

Фашистсем вăрçă операцийĕсем çинчен шавласа тата каппайса пĕлтернĕ хыççăн сасартăк каппайма пăрахнине çакăнпа ăнлантарса памалла: хĕвел-тухăç фронтĕнче пулакан калама çук пысăк çухатусем çинчен, пĕр вăхăтрах Германин виçĕ бомбардировщикĕ совет енне вĕçсе каçнă фактсем çинчен, финсен пĕр роти пĕтĕмпех, тарасран аллисене сыхса лартнă офицерпа тата кĕçĕн командирсемпе пĕрле совет енне каçни çинчен, партизансем активлăн кĕрешнипе нимĕçсем çынсем тата материалсем тĕлĕшпе те калама çук пысăк çухатусем курни çинчен Германи командованийĕ хăйĕн халăхне пĕлтересшĕн мар.

Çакăн пек ĕнтĕ нимĕçсем сасартăк каппайма пăрахнин сăлтавĕсем.

Совет халăхĕ фашистла Германие хирĕç туса пыракан кĕрешӳ хаярланнăçемĕн хаярланса пырать тата нимĕçсен хаçачĕсем Германи халăхне вăрăма тăсăлакан тата йывăр вăрçа хатĕрлеме тытăнать.

Сăмахран, «Гамбургер фремденблат» хаçат июлĕн 9-мĕшĕнче тухнă умстатьяра çапла çырать:

«Германире пурăнакан пĕр çын та вырăссен кампанийĕ çăмăл пуласса шанмалла мар. Çавăн пекех Германи халăхĕн вырăс салтакĕсем вăйлăн хирĕç тăрса çапăçнине те хакламасăр тăмалла мар».

Çиçĕм пек хăвăрт палкани пĕр ĕç, çиçĕм пек хăвăрт пыракан вăрçă — пачах урăхла ĕç пулса тăнине Германири тăнлăрах çынсем ăнланса илме пуçламаççĕ пулмалла. Пирĕн халăха илес пулсан, пирĕн халăх вăл хăй никама пăхăнмасăр тата ирĕклĕн пурăнассишĕн мĕн çĕнтеричченех çапăçассăн тата малалла та çапăçĕ.

Шекспир сăмахĕсемпе каласан:
«Çĕршыв хурçăпа витĕнчĕ,
Чĕресем хурçăран та çирĕпрех
пулса тăчĕç».

Юлашкинчен Лозовский юлташ Германи пропаганди: Совет Союзне хирĕç пĕтĕм Европа вăрçать, тесе çирĕплетсе Англие, Америкăна тата ытти çĕршывсене хăй майлă çавăрма хăтланни çинче чарăнса тăнă.

СССР Союзне хирĕç пĕтĕм Европа вăрçать текен легендăна Японири «Ници-ници» хаçат та ярса илнĕ, çак хаçат, пит инçетре тăнипе пулас, Европа континентĕнче мĕн пулса иртнине ытлашши уççăнах кураймасть. Чăннипе илсен çак мĕнпур концепци шурă та çĕрĕк çипсемпе çĕлесе тунăскер çеç пулса тăрать. Англия Европăн чылай пайне йышăнса тăни çинчен каламасан та, çакна палăртни те çитолĕклĕ: Франция, Бельгия, Голландия, Дания, Швеция, Норвегия, Швейцария СССР Союзне хирĕç вăрçмаççĕ. Çавăн пекех Польша та, Чехословакия та СССР Союзне хирĕç вăрçмаççĕ. СССР Союзне хирĕç формально çаксем вăрçаççĕ: Германия, Италия, Финляндия, Румыния тата Венгрия, вĕсем хыççăн вара Европăри çĕршывсенче гестапон тӳлевлĕ агенчĕсем тата охранкăсем (Квислинг, Дегрель, Муссерт, Дорио, Павелич) автан пек чупса çӳреççĕ, паллах, вĕсем Европăн обществăллă шухăшĕ пулса тăмаççĕ. Тĕрĕссипе илсен çак пилĕк çĕршыври халăхсем те Совет Союзне хирĕç вăрçасшăн мар. Гитлеризм тата унăн Италири изданийĕ—Европа мар, Европа ӳчĕ çинче ӳсе ларнă юхан-суранлă çăпан çеç.

Гитлерпа Муссолини цивилизацине культурăна хӳтлесси çинчен калама хăяççĕ. Çынсене массăллăн вĕлерни, асаплантарни, пĕтĕм халăхсенчен тискеррĕн мăшкăллани цивилизаци шутланать пулсан, çаратса тустарни, мракобеси, варварство тата хура реакци мĕн пулса тăраççĕ-ха вара?

Уманский юлташ Рузвельтпа тата Уэллеспа калаçни

ВАШИНГТОН, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Шурă Çуртра ССР Союзĕн посолĕ Уманскипе Рузвелт тата Уэллес хушшинче калаçу пулса иртнĕ. Калаçу сехете яхăн пынă. Калаçу хыççăн Уманский юлташ хаçатсен представителĕсене çапла пĕлтернĕ: «Президент хăй тата США правительстви хальхи положени тĕлĕшпе тата эпир Гитлерла агрессине хирĕç сарса пыракан кĕрешӳ тĕлĕшпе йышăннă позицишĕн эпĕ президента манăн правительство тав туни çинчен каласа пĕлтертĕм. Çак ыйтусем çине президент туслăн тата инçетрине курса пăхни маншăн питех те кăмăллă пулчĕ».

Хаçатсен представителĕсем Совет Союзĕ США-ра мĕнле материалсем туянма кăмăл туни çинчен панă ыйтусем çине ответлесе, Уманский юлташ çапла каланă: ун çинчен Америка правительствине пĕлтернĕ те ĕнтĕ, тенĕ.

Ютçĕршывсенчи пичет Хĕрлĕ Çар çинчен мĕн çырать

ШАНХАЙ, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Норт чайна дейли ньюс» хаçат умстатьяра çапла çырать: нимĕçсен планĕсем хальхи вăхăтра хыттăнах арканма пултараççĕ, вĕсене пурнăçа кĕртес хăвăртлăх пысăккăн чакнă. Германирен: вырăссем нимĕссене вăйлăн хирĕç тăнине пула çапăçусем çавтери хаяррăн пулса пыраççĕ, тесе пĕлтернисем акă мĕн çинчен шутлаттараççĕ: нимĕçсен çухатăвĕсем калама çук пысăк, вĕсем малалла куçса пыни çав çухатусен хакне кăлараймасть.

СТАМБУЛ, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). «Сон телеграф» хаçат Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă çинчен статья пичетлесе кăларнă, статьяра çапла каланă: Германире, пропагайда тăвас шутпа, ӳстерсе кăтартакан тата пачах тĕрĕс мар пĕлтерӳсем пичетлесе кăлараççĕ. Хăшпĕрисем, хăйсене çавăн пек сведенисемпе улталаса, йăнăш выводсем тума васкаççĕ. Малалла хаçат çапла çырать: Двина юханшывĕпе Днепр юханшывĕ хушшинчи районра Советсем контрнаступленине куçнă. Совет войскисем лайăх вăрçаççĕ. Нимĕçсен наступлени тăвас хăвăртлăхĕ чакнă.

ТЕГЕРАН, июлĕн 8-мĕш. Эрнере пĕрре туха тăракан «Эттелаат» хаçат Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă çинчен ютçĕршывсенчен пĕлтернисене комментарисем паракан обзорта çапла çырать: Совет салтакĕсем хĕвеланăçĕнчи фронтра вилĕмрен хăрамаççĕ, вĕсем хăйсене хăйсем хĕрхенмĕнни вĕсем хăйсен тăшманĕнчен сӳлерех тăнине кăтартса парать. Вĕсем юлашки вăй пĕтиччен, çар хатĕрĕсем пĕтиччен çапăçаççĕ, рукопашнăй çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе виличченех çапăçаççĕ».

(ТАСС).

Германи фашисчĕсен жуликла фото-ӳкерчĕкĕсем

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Германири пропаганда оргăнĕсем Америкăри хаçатсем валли Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра ӳкерсе илнĕ текен фото-ӳкерчĕксем ярса параççĕ. Анчах та хаçатсен редакторĕсем çав ӳкерчĕксен тĕрĕслĕхĕ пирки хăйсем иккĕленнине уççăнах пĕлтереççĕ, вĕсенчен хăшне-пĕрне хаçатра пичетлесе, вулакансене çавăнтах асăрхаттарса сыраççĕ: çак фото-ӳкерчĕксем çине ĕненмесĕр пăхас пулать, тесе кăтартса параççĕ.

Халиччен пĕлтернĕччĕ, «П. М.» (Пост мередиэн) хаçат нимĕç фашисчĕсене тăрă шыв çине кăларнă хыççăн вĕсен жуликла фото-ӳкерчĕкĕсене уйрăмах шанми пулнă. Çак ĕçĕн историйĕ акă мĕнле: июлĕн 7-мĕшĕнче çак хаçат нимĕçсем ярса панă пĕр ӳкерчĕке пичетлесе кăларнă, ӳкерчĕк çинче «Хĕрлĕ Çăран боевой ялавне, хĕвел-тухăç фронтĕнче туртса илнĕ ялава» тытса тăракан нимĕç салтакĕсене кăтартса панă. Тепĕр кунне хаçат çав ӳкерчĕке татах тепĕр хут пичетлесе кăларнă, ӳкерчĕк пирки «Суя ӳкерчĕк» ятлă заметка пичетлесе кăларнă. «Ĕнер,—тенĕ çав заметкăра,—пирĕн хаçат çак ӳкерчĕке пичетлесе кăларчĕ, ун çинче вырăсла сăмахсем çырнă ялава тытса тăракан нимĕç салтакĕсене кăтартса панă. Çав ӳкерчĕк айне Берлинран çапла çырса янă: çакă вăл — хĕвелтухăç фронтĕнчи çапăçура туртса илнĕ ялав. Чăннипе илсен вăл—çамрăк пионерсен флагĕ. Ун çине пионерсен эмблемине ӳкерсе хунă тата пионерсен лозунгне çырнă. Нимĕç фашисчĕсен халĕ ĕнтĕ: пионерсем Германине наступлени тума чăрмантараççĕ, тесе пĕлтерме тивет. Ун пек тумасан хаçат вулакансем мистер Геббельсран çавăн пекех тата флаг çине мĕн çырнине вуламасăрах çав ӳкерчĕке пичетлесе кăларнă «П. М.» хаçатпа Америкăри ытти хаçатсенчен кулма пултараççĕ».

Çакăн хыççăн нумай хаçатсем ятарласах заметкăсем пичетлесе кăларнă, çав заметкăсенче вĕсем—эпир пичетлесе кăларнă ӳкерчĕк Берлин фальшивки пулса тăрать, тесе кăтартса параççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат вулакансене çак ĕç çинчен ятарласах çырнă «Геббельс трюкĕ» ятлă заметкăра пĕлтернĕ. Ассошиэйтед пресс агентстви, «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатпа ытти хаçатсем çапла пĕлтернĕ: США государство департаментĕнче пулнă вăхăтра СССР посолĕ Уманский Германи фашисчĕсен çак суя ĕçне корреспондентсем умĕнче тăрă шыв çине кăларнă, çакăн хыççăн Германин ытти фото-ӳкерчĕкĕсене те ĕненме çук.

Нацистла пропагандистсен тепĕр жуликла ĕçне те тăрă шыв çине кăларчĕ. Пуринпĕн те паллă, Львова Германи войскисем пырса кĕнĕ хыççăн çынсене тĕлĕнмелле тискеррĕн вĕлерме пуçланă. Гестапони палачла ĕçсен мастерĕсем хӳтлăхсĕр граждансене, вăл шутрах хĕрарăмсене, ватă çынсене тата ачасене темиçе кун хушши асаплантарнă тата вĕлернĕ. Вĕсем вĕлернĕ çынсем пиншерĕн шутланаççĕ. Унтан фашистла палачсем хăйсен яланхи йĕркипе ĕçлеме пуçланă. Малтан вĕсем çынсене вĕлернĕ, унтан çав вилĕсене фотоаппаратсемпе ӳкерсе илнĕ, ӳкерчĕксем айне: «вырăссен тискер ĕçĕсем» тесе çырса хунă.

Америкăри хăшпĕр хаçатсем Львоври «вырăссен тискер ĕçĕсем» çинчен Германи пропагандисчĕсем хатĕрленĕ ӳкерчĕксене пичетлесе кăларнă, анчах та вĕсем айне асăрхаттарса çапла çырнă: фашистсен çакнашкал пропагандине ĕненмелле мар, тенĕ. «П. М.» хаçат Львоври «тискер ĕçсем» çинчен Германи панă фото-ӳкерчĕксемпе пĕлтерӳсем пирки тӳрех çапла çырнă: нацистсене нимĕн ĕненмелли те çук. Львовра вĕлернĕ граждансем гестапо жертвисем пулса тăраççĕ.

Фашистсен жуликла ирсĕр суя пĕлтерĕвĕсене çапла ĕнтĕ тăрă шыв çине кăлараççĕ. Америкăри хаçатсем тăрă шыв çине кăларакан нацистла мĕнпур сӳпĕлтетӳсем çине Америка общественноçĕ ытларах та ытларах йĕрĕнсе пăхма пуçлать.

Германие хирĕç кĕрешме Греци çарне туса йĕркелени

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Канадиен пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци королĕ Георг тата премьер-министрĕ Пудерсс ситес сывăх вăхăтрах Англие пырса ситмелле. Вĕсем унта пĕтĕм тĕнчери çĕршывсенче пурăнакан грексене Германие хирĕç кĕрешме организацилес тĕлĕшпе пымалла.

Греци Канадăри комитечĕ çапла пĕлтерет: Греци Египетри портсенче тăракан моторнăй лодкисемпе пулă тытмалли пысăк мар суднисем Греци архипелагăн утравĕсем хушшинче ишсе çӳресе разведка тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Англичансемпе тата де Голль генерал майлă тăракан ытти çынсемпе пĕрле Сирири вăрçă ĕçĕсене Греци салтакĕсем те хутшăнаççĕ. Греци Египета туса кайнă правительстви Греции çĕнĕ çарне туса йĕркелеме тытăннă.

Грецире саботаж анлăн сарăлни çинчен пĕлтереççĕ. Итальянецсем Греции грузсемпе çӳрекен темиçе суднине тытса илесшĕн пулнă, анчах та вăл суднăсене грексем хăйсемех взрыв туса путарнă.



Норвеги çыранĕнчи англичансем Германи крейсерне путараççĕ.
(«Лайф» журналран илнĕ репродукци).

Кучухнехи каннибалсен тискерлĕхĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Украинăри паллă писатель-орденоносец Иван Ле фронтран тавăрăнсан, курнă çынсен сăмахĕсем тăрăх ТАСС корреспондентне çапла каласа кăтартнă:

— Нимĕç фашисчĕсем, советăн чикĕри Любеч хулине туртса илсен тӳрех магазинсене, обществăллă тата культура çурчĕсене çаратма тытăннă. Бандитсем сĕтел-пукансене те, пӳрт-çурта тытказаласа хатĕрсене те çаратнă, вĕсене грузовой машинăсемпе тасатса илсе кайнă. Вырăнти халăхран чылайĕшĕ вăрмансене тарнă. Хулара тарма ĕлкĕреймен стариксем, чирлĕ çынсем çеç тăрса юлнă. Каçхине, тĕттĕмлене пуçласан, вырăнти халăха организованно вăрă-хурахла çаратасси тата тискер ĕç пуçланнă. Ĕçсе супнă фашистсем магазинсене, кварталсене çĕмĕрсе аркатнă, çынсене пере-пере вĕлернĕ. Пĕр çĕр çĕрĕпех хулара тискерлĕх алхаснă. Салтаксем, хăйсен офицерĕсем хĕтĕртнĕ тăрăх, хĕрсем çине выçса антăхнă шаккалсем пекех ыткăннă, вĕсене хăрушла ирĕксĕрленĕ тата вĕсенчен темĕн тĕрлĕ мăшкăлланă. Ирĕксĕрленĕ хыççăн нумайĕшне тискеррĕн вĕлернĕ.

Нимĕç войскисем оккупациленĕ Львов хулинчен тарса тухма пултарнă çынсем çапла каласа кăтартаççĕ:

— Террорпа тата вĕлернипе хăратса пĕтернĕ пирки, çынсем кăнтăр кунĕнче те урама тухса çӳреме хăраççĕ. Темиçе кун çеç каялла хулара савăнăçлă пурнăç пулнă. Халĕ ĕнтĕ вăл йăлтах пушанса юлнă. Пăшалсенчен тата пулеметсенчен персе тăни талăкĕ-талăкĕпех чарăнмасть. Çакна нимĕç оккупачĕсем тăваççĕ, совет влачĕ майлă каласакан çынсене асăрхасанах, вĕсене персе вĕлереççĕ—е тискеррĕн асаплантараççĕ. Граждансен ытлараххăн пайĕ вăрмансене, партизанла отрядсене тухса кайнă. Вĕсем кĕтмен çĕртен пит хăвăрт пыра-пыра тапăннисем час-часах нимĕç войскисем хушшинче паника кăлараççĕ. Нимĕç охранки—гестапо — тулли нагрузкăпа «ĕçлет». Хулара кашни кунах облавăсем, ухтарусем тăваççĕ, çĕршер çынсене тĕрмене хупаççĕ тата çул юпписенче çака-çака вĕлереççĕ.

Çапла хуçаланаççĕ ĕнтĕ фашистла йыткĕтĕвĕсем хăйсем йышăннă çĕрсем çинче. Оккупациленĕ хуласемпе ялсенчи халăхсем хăйсен пусмăрçисем çине çавтери тарăхаççĕ, вĕсене пĕтĕм чĕрен кураймаççĕ. Кунти халăхсем çакна çирĕппĕн шанса тăраççĕ: геройла Хĕрлĕ Çар вĕсене çак пусмăртан часах хăтарĕ.

Германи сводкисене суеçтерсе çырни çинчен

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Социал-демократен» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ суйма юратакан фашистсем сводкисене хатĕрленĕ чухне усă куракан жуликла механика çинчен каласа парать. Корреспондент çапла кăтартса парать: Российăна хирĕç вăрçă пуçланнăранпа Германии вăрçă ĕçĕсем çинчен калакан сводкисенче ĕçсем çинчен кĕскен каласа парас вырăнне пропагандистла сӳпĕлтетӳсем пуçланнă. Халиччен Германи каларакан коммуникесене çар ĕçĕн специалисчĕсем хатĕрленĕ. Халĕ ĕнтĕ коммюникесене татăклăн редакцилесе хатĕрлес ĕçе хăйĕн ставкинче Гитлер тăвать. Пĕлтерӳсен характерне вăл хăй улăштарать тата унта хушса çырать. Çак пĕтĕм махинацине кăтартса парас тĕлĕшпе корреспондент çакăн пек пример илсе кăтартать. Пĕррехинче пĕр районра совет салтакĕсен группине хупăрласа илни çинчен калакан пĕлтерӳ пынă. Çак пĕлтерĕве улăштару кĕртнĕ те çапла пĕлтернĕ: совет салтакĕсен группи нимĕçсем енне куçса каçнă имĕш. Картинăна «вăйлатас» шутпа çапла хушса каланă: çак салтаксем малтан «политикăллă комиссарсене вĕлерсе хăварнă», тенĕ. Тепĕр коммуникере каллех çав группăна илсе кăтартнă, анчах халĕ вĕсене «тарса каçнисем» тесе ят панă тата вĕсен хисепне перопа пĕрре чĕрсех 3,5 хут ытла ӳстернĕ. Çак жуликла махинацисене тăрă шыв çине кăларса, корреспондент çапла кăтартса парать: жуликла ĕçсен участникĕсем уççăнах пĕр йăнăш тунă: Хĕрлĕ Çарăн политикăллă комиссарĕсен институтне çулталăка яхăн каярах хупни çинчен вĕсем манса кайнă е пĕлмен пулĕ.

Германи пропаганди усă куракан иккĕмĕш метод, тет корреспондент, хӳтлăхсĕр халăх тĕлĕшпе «вырăссем хаяр ĕçсем туни» çинчен çырса кăтартасси пулса тăрать. Çапла сĕмсĕр сӳçтернине ялан пекех «документальнăй кăтартусемпе çирĕплетеççĕ», анчах та вĕсене, паллах ĕнтĕ, никам та ĕненмест.

Норвеги королĕ радио тăрăх тухса калани

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 11-мĕшĕнче каçхине Норвеги королĕ Хокон Норвеги халăхне чĕнсе радио тăрăх сăмах тухса каланă. Вăл норвежецсем кăтартакан чăтăмлăхпа çирĕплĕхшĕн хăй савăнни çинчен калана, Норвеги суту-илӳ флотĕнчи мороксене вĕсен паттăрлăхĕшĕн уйрăмах тав тунă.

Малалла хăйĕн сăмахĕнче король Хокон çапла каланă: нимĕçсем, эпир большевизма хирĕç кăна вăрçатпăр, тесе каласçĕ. Çак ултава ан ĕненĕр. Тӳрĕ кăмăлпа сăнаса тăракан кашни çын çакна пĕлме тивĕçлĕ: Россия çине тапăнни вăл пуринчен малтан Германи тĕнчере пуçпулса тăрассишĕн пуçланă кĕрешӳн пĕр пайĕ пулса тăрать. Çакă пирĕн çĕршывăн мĕне пĕлтернине манăн калама та кирлĕ мар, çирĕпшĕн вăл ахалех паллă. Эпир пуринчен ытларах хакланисене пурне те—ирĕклĕхе тата никама пăхăнмасăр пурăнас положенине мĕнле путарса пынине эпир кашни кунах куратăр. Германия çĕнтерес пулсан, çакă вăл Норвегия йăлтах чуралăха кĕрсе ӳкессине пĕлтерет. Нимĕçсем пирĕн çĕршыва мĕнле мелсемпе туртса илни, пирĕншĕн мĕн хаклине йăлтах вĕсем хаяррăн путарса пыни çавăн çинчĕн уççăнах кăтартса парать. Çакна шута илсен ĕнтĕ ăнланма йывăр мар: Российăна хирĕç пыракан вăрçăра Германие пулăшу панипе эпир хамăрăн çĕршыва Германи пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешӳре Германие пулăшу паратăр. Эпир Германие хирĕç вăрçă состояний-ĕнче тăратпăр. Нимĕçсем—пирĕн тăшмансем. Пирĕнне Финляндипе хушшинчи отношенисем çак факта сирĕнтен хупăрласа тăмалла мар, сире нимĕнле пропаганда та улталамалла мар.

Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартса паракан движени

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Англире Инди студенчĕсен обществисен федерацийĕн исполнительнăй комитечĕ резолюци йышăннă, çав резолюцире вăл «нацизм тата фашизм совет халăхĕ çине киревсĕррĕн тата пĕр сăлтавсăр тапăннине» вăйлăн питлет, «хăйĕн тăван çĕршывне хӳтлекен тата агресси жертви пулнă мĕнпур халăсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен Совет халăхĕ тăшмана хирĕç геройла кĕрешнипе савăнни çинчен каласа пĕлтерет. Инди студенчĕсен мĕнпур обществисем ССР Союзне çирĕппĕн пулăшăç, мĕншĕн тесен вĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ: нацистла тата фашистла йыткĕтĕвĕсене хирĕç пыракан совет халăхĕн кĕрешĕвĕ вăл—вилĕмлĕ кĕрешӳ, этемлĕхе вĕлерекен, чуралантаракан тата тустаракан вăйсене хирĕç пыракан кĕрешӳ. Эпир çакна хамăр çирĕппĕн шанса тăни çинчен калатпăр, совет халăхĕн хĕçпăшаллă хăвачĕ — унăн хăюллă та паттăр Хĕрлĕ Çарĕ юн ĕçсе тăранма пĕлмен фашистсене пĕтерсе тăкатех».

КАБУЛ, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Индири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, социалистла партин Пенджабри организацийĕн исполнительнăй комитечĕ ятарласах йышăннă резолюцине Германия Совет Союзĕ çине тапăннине сивлесе питленĕ тата Совет Союзне пĕтĕмпех кăмăллани çинчен каланă. Центральнăй провинцисенчи профсоюзсен конгресĕнчи организацисен председателĕ Руикар çапла каланă: Гитлер Совет Союзĕ çине пĕр сăлтавсăр тапăннăччĕ. Çакăн пек ултавлăн тапăнни çине чĕмсĕррĕн пăхса тăма юрамасть. Руикар Англия Совет Союзне пулăшу пама йышăннине ырланă.

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Канадиен пресс» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ванкуверти (Британи Колумбийĕ) профсоюзсем пурте пĕрсаслă пулса çакăн пек тума ыйтнă: Гитлера хирĕç пыракан кĕрешӳре Канада Совет Союзне пур енчен те пулăшмалла. Торонтори митингра,—унта 1 500 украинец пулнă,—йышăннă резолюцире «хăйсен таса çĕрне предателле агрессортан хӳтĕлекен Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕр шухăшлă пулни» çинчен каланă.

Виннипег хулинчи украинец-антифашистсен митингĕнче пулнă çынсем те Совет Союзне пулăшу пама ыйтнă. Митингра провинцири законодательнăй собрани членĕ Манитоба сăмах тухса каланă.

Германи халăхĕ— вăрçа хирĕç тăрать

Мексикăри «Эспания популяр» хаçат Стокгольмран пĕлтернинче çапла çырать: Германи халăхĕн анлă сийĕсем хушшинче вăрçа хирĕçле движени кунран кунах ӳссе пырать. Дюссельдорф çине бомбăсем пăрахнă вăхăтра, фашизма хирĕç кĕрешекенсем, тĕттĕмлĕхпе усă курса, сийĕнчех мир тума чĕнекен тата фашистла бандитсен преступленийĕлле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан листовкăсем салатнă. Листовкăсенче оккупацленĕ çĕршывсенчи халăхсемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен каланă. Çавăн пекех Германи халăхне листовкăсенче XX-мĕш ĕмĕрти бандитсем Польша хресченĕсене çĕршерĕн вĕлерни çинчен пĕлтернĕ.

Çав хаçатах, Германири «Фелькишер беобахтер» хаçат çине кăтартса çапла çырать: пĕр хресчене Польшăн тытăнна лекнĕ çар çыннипе калаçнăшăнах арестленĕ.

Оккупантсене кураймалăх кунран кунах ӳссе пырать

Англири «Экономист» ятлă журнал çапла çырать: Голландире ялхуçалăхĕнчи килти кайăк-кĕшĕксен шучĕ оккупаци тунă вăхăт хушшинче 22 миллионран 7 миллиона çити чакнă. Оккупантсем хресченсенчен юлашки çимĕçсене те туртса илеççĕ. Вĕсем хресченсенчен 25 пин лаша туртса илнĕ.

Нимĕçсем Голландие çаратса тустарнă пирки унти халăх ниçта кайса кĕрейми тарăхать. Нумаях пулмасть Лейденпа Дельфтре студентсен демонстрацийĕсем пулнă. Çурçĕр Голландире те пысăк хумханусемех пулса иртнĕ. Нимĕçсем çав районра вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă тата Амстердам, Хилверсум тата Заандам хулисем çине пысăк штрафсем хунă. (ТАСС).

Фашистсене хирĕçле шухăш-кăмăл ӳссех пырать

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Англири «Ивнинг стандарт» хаçатăн Германи чиккинче сӳрекен корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Гитлер СССР çине тапăннă хыççăн Германи халăхĕ хушшинче, уйрăмăнах Германи çарĕнчи салтаксем хушшинче фашистсене хирĕç пропаганда тăвасси вăйланнă. Гестапо çынсене, çав шутра рядовой штурмовиксене те, массăллăн арестлет. Нейтральнăй çĕршывсенчи дипломатиллĕ çынсем кăтартса панă тăрăх, хальхи вăхăтра Германи халăхĕн моралльĕ шухăш-кăмăлĕ вăрçă пуçланнă чухнехинчен чылай аялта тăрать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5059

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. б 3Я 84 п. л.